15-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
7
ЫТЛАРИКУН
81 (6016) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленас тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

50. Комсомольски районри Нови-Челны-Сюрбеево ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхоз (колхоз председателĕ **Д. А. Анчурин** юлташ, партин пуçламăш организацин секретарĕ **А. А. Козлова** юлташ). Колхоз çуракинче кирлĕ вăрлăха пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе тасатса хунă, пăрçа-ясмăк вăрлăхне 35 центнер алăпа суйласа сортланă. Ялхуçалăх инвентарĕпе кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Хĕллехи агротехника мероприятийĕсен планне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. Уя 1450 лав тислĕк кăларнă, 25 центнер минераллă удобренисем турттарса килнĕ, 19 центнер кĕл пухса хунă.

51. Комсомольски районри Асаковски ялсоветне кĕрекен «Двигатель революции» колхоз (колхоз председателĕ **В. И. Калачников** юлташ, агротехник **Ф. В. Табуркин** юлташ). Колхоз çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе çитнĕ. Акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмĕшпех сортласа хунă. Ялхуçалăх инвентарĕсене пурне те юсаса çитернĕ. Уя 2050 лав тислĕк тăкнă, 300 центнер кĕл пухнă.

52. Комсомольски районри Кивĕ Сĕнтĕр ялсоветне кĕрекен «Ударник» колхоз (колхоз председателĕ **С. Г. Гильманов** юлташ). Вăрлăхлăх тырра çуракинче акма кирлĕ чухлĕ пĕтĕмĕшпех тасатса хатĕрлесе хунă. Мĕнпур ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса çитернĕ. Лаша кӳлмелли таврашсем пурте хатĕр. Хĕллехи агротехника мероприятийĕсене колхоз планран ирттерсе пурнăçа кĕртнĕ.

53. Красноармейски районри Янчеллă ялсоветне кĕрекен «Победа» колхоз (колхоз председателĕ **А. Г. Герасимов** юлташ). Колхоз акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмĕшпех тасатса хатĕрлесе хунă, пур культурăсене те акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Ялхуçалăх тата транспорт инвентарьне йăлтах юсанă. Лашасем кӳлмелли таврашсене мĕн кирлĕ чухлех хатĕрлесе хунă. Хире 850 лав тислĕк кăларнă, 20 центнер кĕл, 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 25 центнер фекали пухнă. Колхозри лашасем пурте лайăх, мăнтăр.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. М. Коллонтай юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Александра Михайловна Коллонтай юлташа, халиччен Ленин орденĕпе наградăланăскере, вăл çуралнăранпа 70 çул тултарнă май, Совет государствишĕн питех те палăрса тăракан ĕçсем тунăшăн **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 4-мĕш.

Строительство Наркомачĕн работникĕсене наградăлани

Оборона заводне тăвас тĕлĕшпе Правительство заданине кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Строительство Наркомачĕн работникĕсене наградăланă:

Ленин орденĕпе: бетонщиксен бригадирне **Измайлова,** главэлектромонтаж начальникне **Левина,** строительнăй участок начальникне **А. П. Подлепа,** строительство начальникне **А. Хворостенские.**

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—9 çынна;

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—12 çынна;

«Знак Почета» орденĕпе — 15 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе — 15 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе — 12 çынна наградăланă. (ТАСС).

СССР Цветной Металлурги Наркомачĕн 518-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлани

Тăван çĕршыв оборонин нушисем валли продукци кăларас тĕлĕшпе Оборонăн Государственный Комитечĕ панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх СССР Цветной Металлурги Наркомачĕн 518-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. (ТАСС).

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

I.

Артиллерин 508-мĕш тата 210-мĕш гаубичнăй полкĕсенчен артиллерин Гвардейски полкĕсем тăвасси çинчен

Хамăр тăван Совет çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче артиллерин 508-мĕш тата 210-мĕш полкĕсем çирĕплĕхпе паттăрлăхăн, дисциплинăпа организованноçăн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, çав полксем фашистсен войскисене питех те пысăк çухатусем кӳчĕç, тăшмана аркатмаллах пыра-пыра çапса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкрĕç, нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пычĕç.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, çав полксен личнăй составĕ çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн асăннă полксенчен Гвардейски полксем тунă. Уйрăмăн илсен:

1. Артиллерин 508-мĕш гаубичнăй полкĕнчен—артиллерин 15-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **М. Кумаш.**
2. Артиллерин 210-мĕш гаубичнăй полкĕнчен—артиллерин 16-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **Б. М. Покрышкин.**

Асăннă полксене Гварди ялавĕсем параççĕ.

II.

Истребительнăй авиацин 145-мĕш тата 147-мĕш полкĕсенчен Гвардейски полксем тăвасси çинчен

Тăван Совет Çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче истребительнăй авиацин 145-мĕш тата 147-мĕш полкĕсем çирĕплĕхпе паттăрлăхăн, дисциплинăпа организованноçăн тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, авиацин çав полкĕсем фашистсен войскисене питех те пысăк çухатусем кӳчĕç, тăшмана аркатмаллах пыра-пыра çапса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкрĕç, нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пычĕç.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, çав полксен личнăй составĕ çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн асăннă полксенчен Гвардейски полксем тунă. Уйрăмăн илсен:

1. Истребительнăй авиацин 145-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 19-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **Г. А. Рейфшнейдер.**
2. Истребительнăй авиацин 147-мĕш полкĕнчен—истребительнăй авиацин 20-мĕш Гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **П. З. Шевелев.**

Асăннă полксене Гварди ялавĕсем параççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 4-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк улшăнусем те пулман.

Апрелĕн 3-мĕшĕнче нимĕçсен 23 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн икĕ транспортне путарнă: пĕр транспорчĕ—7.000 тонна, тепĕр транспорчĕ—3.500 тонна водоизмещениллĕ.

* * *

Апрелĕн 3-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 15 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 15 лавне, 6 полевой тата зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 70 вагона çитти сĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника хирĕç 6 кун хушши çапăçса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 3.400 çынна ытла вĕтерсе тăкнă. Противникăн çакăн пек трофейĕсем тытса илнĕ: пĕр танк, 28 орудин, 106 пулемет, 19 миномет, 43 автомат, 500 яхăн винтовка, танксене хирĕç пемелли пăшалсем нумай, 3.170 снаряд, 1.800 мина тата унсăр пуçне минăсем тултарнă 350 ещĕк, 1.400 граната тата унсăр пуçне гранатăсем тултарнă 90 ещĕк, 114.800 пăшал патронĕсем, 20 ещĕк ракета, 10 ещĕк тар, 200 коробка пулемет лентисем, 4 радиостанци, 5 трактор, 6 грузовой тата 2 çăмăл автомашинăсем. Тыткăна илнисем пур. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн артиллерин вутĕпе тата разведка групписем кĕрешнипе нимĕçсен 8 орудине, 35 минометне, 11 станковăй пулеметне, 16 автомашинине тата çар грузĕсем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 6 танк сĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра, халăх пурăнакан пункта йышăнса илсе, красноармеецсем нимĕçсен 120 салтакпа офицертан тăракан гарнизонне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Макаров юлташ ертсе пынипе боецсен группи тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та кĕтмен çĕртен нимĕçсен батальонĕн штабне атакăланă. 4 офицера пĕтерсе тăкса, нимĕçсен 2 салтакне тыткăна илсе, пирĕн боецсем трофейăсемпе тата паха документсемпе хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

З. юлташăн партизанла отрячĕ пирĕн Калинин фронтĕнче кĕрешекен чаçсенчен пĕрин командованийĕ панă задание пурнăçа кĕртес шутпа нимĕçсен подразделенине тылран пырса çапнă. Совет патриочĕсем тăшманăн 26 салтакне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 2 офицерне тата 2 салтакне тыткăна илнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 пулемет, 5 автомат, 15 винтовка, 2 пистолет тата 6 лаша.

* * *

Аялалахра нимĕçсен 2-мĕш танковăй армийĕн главнăй врачĕн 322-мĕш номерлĕ секретлă çырăвĕнчен илнĕ кыпăксене пичетлетпĕр:

«Юлашки эрнесем хушшинче госпитальсене, чирлисем пухăнмалли пунктсене тата ытти санитарнăй чаçсене килекен чирленĕ салтаксен шучĕ ӳссе кайрĕ. Госпитальсене яракан чирленĕ салтаксен хисепĕ малалла та çаксе ӳснех пынă... 400 çынран кая пулмасан, санитарнăй чаçсем кĕске вăхăт хушшинчех аманнисене те, чирленисене те йышăнма пултараймĕç. Ахаль шутласа пăхнисех госпитальсем тулса ларассине лайăх кăтартса парать. Госпитальсене пырса выртакан чирленĕ салтаксен хисепне, чаçсенчи врачсем салтаксем çапăçма пултарассине çирĕппех хакласа пăхсан, питех те нумай чакарма пулать. Санитарнăй чаçсене янă чирленĕ салтаксене пăхсан, эпĕ çакăн пек диагнозлă çынсене тупрăм: «походра çӳреме пултарайманнине кăтартса парать», «простуда», «гриппознăй инфекци». Санитарнăй чаçсене çакăн пек диагнозсемпе янине те тупрăм эпĕ: «вар анса ларнине кăтартса парать», «çĕвĕсем ыратнине кăтартса парать», «кăвапа анса ларнине сыватма ярат пăр» т. ыт. те. Армин главнăй врачĕ панă распоряжени тăрăх, салтаксен çара иличчен пулнă, çар службине юрăхлă пулма чарман ситменлĕхсемпе вар анса ларнисене операцисем туса сыватма тытăнах чарса лартнă. Эпĕ темиçе санитарнăй офицера пур тĕрлĕ чирпе чирленĕ салтаксене те тĕплĕнрех пăхса тухма хушрăм, фронтран тылалла куçарма чартăм. Çак мероприяти салтаксем фронтран тыла тарассине пĕтерсе лартма пулăшмалла, çавăнпа та чаçсенчи врачсен пурин те ăна пурнăçа кĕртме тăрăшмалла, врачсен хăйсен хăюлăхĕпе çирĕплĕхне кăтартмалла, çынсен çапăçма кирлĕ пултарулăхĕ çителĕклине тупса кăтартмалла».

Çапла ĕнтĕ арми врачĕ çакна çирĕплетсе кăтартать:

Германи командованийĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тем пысăкĕш çухатусем пулса пынине саплас тесе, çар ретне уксахчăлахсене, чирлисене, çар службине юрăхсăр çынсене мобилизацилет;

Гитлеровецсем куçкĕретĕнех чирлĕ салтаксене сыватма чараççĕ, вĕсене вилĕм пуянма çапăçăва хăваласа кĕртеççĕ;

Нимĕçсен нумай салтакĕсем, ăссăр та пĕр шанчăксăр вăрçа вăрçма килĕшмен пирки, фронтран пăрахса тарасшăн çунаççĕ.

Нимĕçсен 2-мĕш танковăй армийĕн главнăй врачĕн çырăвĕ нимĕç фашисчĕсен çарне сывлăх енчен те, шухăшкăмăл енчен те питех те лайăх кăтартса парать.

* * *

Гитлерла бандитсем Ленинград облаçĕнчи Великая Нива ялне çунтарса янă тата унта юлнă çынсене пурне те персе вĕлернĕ, вăл шутра: 70 çулти старик М. И. Ивановпа унăн арăмĕ, колхозниксем: 75 çулти Павлов, 50 çулти М. Иванов, 40 çулти В. Иванов т. ыт. те. Прешиво ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем ватă старикесене—70 çулти И. Петрова, 77 çулти Н. Ефимова, 50 çулти Алексеева, 67 çулти Васильева тата 63 çулти Гумбинские персе пăрахнă.

* * *

Германире фабрикăсемпе заводсенче çынсем ...пула ăнсăртран аманасси питĕ вăйлăн ӳссе пырать. Фашистсен «Франкфуртер цейтунг» хаçачĕ çакна палла туса çырса, «Германи промышленноçне ...сене хумĕ пусарса лартать», тесе ...хать. Çав хаçатри сутăнчăк çыравçĕсем амакнă рабочисене ответ тыттарма хушаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен шучĕпе ăнсăртран аманнисен 80 проценчĕ рабочисен хăйсен айăпĕпе пулса пырать имĕш. Çапла ĕнтĕ, гитлерла Германире талăкра 14 сехет хушши тӳсме çук йывăр ĕçе туса пынипе тата выçă пирки халран кайнипе пула производствăра аманнă рабочисене хăйсем пуçлаççĕ, вĕсене тĕрмене лартмалла тăваççĕ.

Апрелĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле палла улшăнусемех те пулман.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, хăй унччен çухатнă позицисене каялла туртса илме хăтланса, танксемпе контратака пуçласа янă. Нимĕçсен танкĕсене хирĕç совет танкĕсем тухнă. Танксен çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Çапăçура нимĕçсем, хăйсен 14 танкне, пĕр батальона çити пехотине тата танксене хирĕç пемелли 4 батарейине çухатса, каялла ыттăннă. Пирĕн боецсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче нимĕçсен 1942 çулта туса кăларнă пур енчен те юсавлă 3 танкĕ пур.

* * *

Пирĕн стрелковăй подразделени приказ илнĕ. Çав приказ тăрăх тăшманăн тылне кĕрсе кайса, Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче ,нимĕçсен пысăк карательнăй отрядне пĕтерсе тăкмалла пулнă. Пирĕн боецсем çав операцие питех те пĕлсе, çавтери ăнăçлăн туса ирттернĕ. Вĕсем нимĕçсен 500 пехотинецран тата 150 кавалеристран тăракан карательнăй отрядне çавăрса илнĕ те 9 сехет хушши пынă çапăçура пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Гитлеровецсем, вилнисене шутласан кăна, 200 салтакпа офицера çухатнă. Пирĕннисен трофейăсем пур... противникăн тылĕнче нимĕçсен гарнизонĕ çине тапăннă. Çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсен 130 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн темиçе салтакĕ тыткăна паранна. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 4 станковăй пулемет, 7 автомат, 100 яхăн винтовка тата ытти тĕрлĕрен çар пурлăхĕсем.

* * *

Белоскурский юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсен отрячĕ

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 11 орудине пĕтерсе тăкнă, горючи складне тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противник артиллерийĕн 2 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă.

* * *

М. ялĕшĕн пынă çапăçура кĕçĕн лейтенант Скипко, нимĕçсем пирĕн боецсем çине пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăракан блиндаж патне вăрттăн шăвăнса çитнĕ те тӳррĕн тĕллесе ывăтнă гранатăсемпе блиндажри мĕнпур нимĕç салтакĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Скипко юлташ нимĕçсен пулеметне ярса тытнă та çавăнтах противник çине пеме пуçланă.

* * *

Нимĕçсен 170-мĕш дивизийĕнчи артиллерин 240-мĕш полкĕнчи 5-мĕш батарейăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Ганс Обух çапла каласа кăтартнă:

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти мартăн 23-мĕшпе апрелĕн 4-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧИ войскăсем противника хирĕç мартăн 23-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 4-мĕшне çитиччен çапăçнă хушăра çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—28, орудисем—122, минометсем—69, пулеметсем—541, автоматсем—336, винтовкăсем—3.234, снарядсем—12.968, тĕрлĕрен минăсем—7.020, гранатăсем—3.132, патронсем—1.206.000, ракетăсем—1.568, рацисем—9, телефон кабелĕ—94 километр, автомашинăсем—186, лавсем—54, паровозсем—3, чугунçул вагонĕсемпе платформăсем—220, парашютсем—350, снаряд гильзисем—3.200, йĕплĕ пралук—пĕр тонна, бензин пичкисем—347, лашасем—219, продовольстви—3 вагон.

Мартăн 23-мĕшпе апрелĕн 4-мĕш хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 40 пин çынна яхăн вилсе пĕтнĕ.

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан 161 пункта противникран ирĕке кăларнă.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

Колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе табак тата махорка памалла тăвасси çинчен

Колхозсенче табак тата махорка акса тăвас ĕçе малалла аталантарас шутпа, промышленноçа чĕртавар парса тăрас тата Хĕрлĕ Çар табакпа махорка ыйтнине тивĕçтерес шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Табакпа махоркăна контрактаци договорĕсем тăрăх хатĕрлес йĕркене пăрахăçа кăларас.

2. 1942 çултан пуçласа государствăна табак тата махорка обязательнăй йĕркепе памалла тăвас:

а) Алтай, Краснодар крайĕсенчи, Воронеж, Сталинград облаçĕсенчи, Азербайджан, Армян, Грузин, Казах, Киргиз, Узбек тата Таджик ССР-сенчи табак акса тăвакан колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе табак параççĕ;

б) Воронеж, Вологда, Иваново, Иркутск, Новосибирск, Омск, Пенза, Рязань, Саратов, Сталинград, Тамбов, Тула тата Ярославль облаçĕсенчи, Алтай, Красноярск крайĕсенчи, Мари, Мордва, Тутар, Удмурт, Чăваш АССР-сенчи, Казах тата Узбек ССР-сенчи махорка акса тăвакан колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе махорка параççĕ.

3. СССР Наркомземне çапла тума хушас: СССР Наркомпищепромĕпе, ĕççынни депутачĕсен (облаçри, крайри) Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсемпе тата республикăсен Совнаркомĕсемпе килĕшсе, 1942 çулта табак тата махорка акмалли çĕр лаптăкне ытти культурăсем акăнакан çĕр лаптăкне чакарнипе ӳстермелле тата табакпа махоркăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла, çапла майпа государствăна табак тата махорка памалли обязательнăй поставкăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçламалла тăвас пулать.

4. Союзлă тата автономиллĕ республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, ĕççынни депутачĕсен крайри тата облаçри совечĕсен исполнительнăй комитечĕсене, государствăна обязательнăй йĕркепе табак тата махорка парас тĕлĕшпе республика, край тата область тăрăх палăртнă планпа килĕшӳллĕн, колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе табак тата махорка памалли плансене вунă кунлă срокра районсем тăрăх çирĕплетсе пама хушас.

5. Райсоветсен исполкомĕсене çапла тума хушас: обязательнăй поставкăсем тăрăх табак тата махорка памалли нормăна табакпа махорка акакан кашни колхоз, колхозник килĕ тата единоличник хуçалăхĕ валли, çавăн пекех тата табакпа махорка акма план илнĕ колхозсем валли те 5 кунлă срокра палăртса памалла, кăна тунă чухне çакна шута илмелле: колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе табак тата махорка парас тĕлĕшпе район валли палăртса панă плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

6. Çулталăкра табак тата махорка памалли обязательнăй поставкăсене пурнăçлама 1942 çул валли çакăн пек сроксем çирĕплетсе парас (çулталăклăх панă планран, процентпа):

	табак	махорка
августра	—	15
сентябрьте	10	25
октябрьте	20	40
ноябрьте	25	20
декабрьте	25	—
январьте	10	—
февральте	10	—

7. Обязательнăй йĕркепе махорка памалли плана тултарнă колхозсене государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă памалли обязательствăна тултарас шутпа çакăн чухлĕ хисеппе махорка пама ирĕк парас:

15 килограмм тĕштырă вырăнне 10 килограмм пĕрремĕш сортлă махорка памалла, махоркăн ытти сорчĕсене вĕсен пахалăхне кура расчет туса йышăнмалла.

8. 1941 çултан пуçласа çакăн пек йĕрке тăвас: обязательнăй поставка тăрăх хăйсен обязательствисене тултарнă хыççăн государствăна табак тата махорка паракан колхозсем хатĕрлев хакĕсем çĕр пуçне çакăн чухлĕ надбавка илеççĕ:

а) обязательнăй поставкăн 10 проценчĕ чухлĕ табак тата махорка парсан — государствăна панă мĕнпур табакпа махоркăн хатĕрлев хакĕн 50 проценчĕ чухлĕ;

б) обязательнăй поставкăн 10 процентĕнчен пуçласа 25 процентне çити табак тата махорка парсан — государствăна панă мĕнпур табакпа махоркăн хатĕрлев хакĕн 100 проценчĕ чухлĕ;

в) обязательнăй поставкăн 25 процентĕнчен ытларах табак тата махорка парсан — государствăна панă пĕтĕм табакпа махоркăн хатĕрлев хакĕн 200 проценчĕ чухлĕ.

9. Табак тата махорка парас тĕлĕшпе çак постановленире кăтартнă обязательствăсене пурнăçа кĕртесси кашни колхозăн, колхозник килĕн тата единоличник хуçалăхĕн пĕрремĕш обязанноçĕ пулса тăрать, обязательствăсене ятарласах пурнăçа кĕртмесĕр тăнăшăн закон тăрăх айăплаççĕ.

10. Обязательнăй поставка йĕркипе паракан табака тата махоркăна йышăнас ĕçе ССР Союзĕн Апат-çимĕç промышленность наркомачĕ (Главтабак) çине хурас.

11. Колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем 1941 çулти июлĕн 1-мĕш тĕлне контрактаци йĕркипе табак тата махорка парайман пирки пулнă парăма пăрахăçа кăларас.

Çакăнпа пĕрлех 1942 çулта колхозсем, колхозниксен килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе табак тата махорка памалли плана СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх çирĕплетсе панă.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ вĕçленнĕ

Апрелĕн 4-мĕшĕнче Мускавра укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ вĕçленнĕ. Вылявра укçан 2.071.500 выигрыш пулнă, пĕтĕмпе 265 миллион тенкĕлĕх, тата япалан — 28.500 выигрыш, пĕтĕмпе 15 миллион тенкĕлĕх.

100 тата 500 тенкĕлĕх укçан тухнă выигрышсене вырăнти перекет кассисем тӳлеççĕ.

1.000 тенкĕлĕх тата унран пысăкрах укçан тухнă выигрышсене лотерейăн кашни выляса илнĕ билетне тĕрĕсленĕ хыççăн перекет кассисен Главнăй Управленийĕ тӳлет. Çавăнпа та ун пек билетсене вырăнти перекет кассисем Главнăй Управленине ярса параççĕ.

Тиражра япалан тухнă выигрышсене лотерейăн выляса илнĕ билечĕсен хуçисене хăйсен адресĕпе тӳрех ярса параççĕ. Выляса илнĕ япалана илме лотерейăн выляса илнĕ билетне вырăнти перекет кассине памалла. Вăл çавăн пек билетсене хăй шучĕпе Мускава перекет кассисен Главнăй Управленине ярать. Лотерея билечĕн хуçи выльаса илнĕ япала вырăнне укçан илме кăмăл тусан, япала вырăнне вăл мĕн хак тăнине укçан та илме пултарать. (ТАСС).

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Л. М. Каганович юлташа, Çулйĕр Халăх Комиссарĕн обязанноçĕсенчен хăтарса, чугунçулпа тинĕс тата юханшыв транспорчĕсен ĕçне пĕрлештерсе тăракан тата турттарас ĕçĕн государственнăй планĕсене палăртман, плансем хатĕрлесе йышăнса тăракан Транспортнăй Комитет председателĕн заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

Çулйĕр Халăх Комиссарĕ пулма СССР Верховный Совет Президиумĕ А. В. Хрулев юлташа уйăрса лартнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

«Салтаксем салхуллă, вĕсен шухăшĕ-кăмăлĕсем пусăрăнса çитнĕ. Пĕтĕм батарейипе те вăрçă пĕтессине кĕтмен салтак пĕре те çук. Пурте питĕ макăрса çитнĕ. Полка ĕнтĕ виçĕ хутчен вăй хушса пачĕç. Анчах та опытсăр, вĕренмесе çитермен резервистсем питех те часах стройран тухаççĕ. Пирĕн батарея юлашки вăхăтра Т. ялĕнче тăратчĕ. Ăна румынсен пехоти хӳтĕлетчĕ. Вырăссем вăйлă атака пуçласа ярсан, румынсем тарса пĕтрĕç. Наблюдательнăй пунктран батарея командирĕ обер-лейтенант Рихтер тата лейтенантсем Сеузенна Трипп чупса килчĕç. Вĕсем пирĕ мĕн пĕтиччченех хирĕç тăма хушрĕç. Анчах та часах советсен танкĕсем курăнса кайрĕç. Пирĕн батарейăн пур орудийĕсем те вырăссен аллине лекрĕç».

* * *

Румынсен 5-мĕш егерски полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Василий Ион Адамеску çапла каласа панă: «Пĕрремĕш рота командирĕ капитан Дорвин оккупациленĕ районсенчи хресченсене вăрă-хурахла çаратнă. Вăл вĕсене пĕр çын юлмиччен ухтарттарнă, вара вĕсен мĕнпур хаклăрах япалисене — мануфактурăна, тумтирсене туртса илнĕ. Эпир 2 уйăх çурă тăнă Апостоловăра капитан Дорвин питĕ нумай мануфактура çаратса тултарчĕ, вара ăна пĕтĕмпех Румынине хăйĕн арăмĕ патне ячĕ. Çавăнтан каяс умĕн капитан унти çынсенчен 26 велосипед тата ытти тĕрлĕ япаласем питех те нумай туртса илчĕ».

Апрелĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 5-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пăлла улшăнусем те пулман.

Апрелĕн 4-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче нимĕçсен 102 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 115 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 60 яхăн лавне, горючи тултарнă автоцистернине, 25 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 5 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 7 вагона тата паровоза çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн стрелковăй часть противникăн хирĕç тăма çирĕплетнĕ пĕр пунктне атакăланă та ăна пĕтĕмпех аркатнă, землянкăсемпе блиндажсенче тата окопсенче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 11 пулемет, 140 винтовка, 1.600 мина, 200 снаряд, 150.000 патрон, 2 радиостанци, 9.000 метр телефон кабелĕ тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем.

* * *

Капитан Прохоров командир пулса ертсе пыракан чаçри зенитчиксем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) март уйăхĕнче тăшманăн 12 самолетне персе антарнă.

* * *

Панкратов командирăн отделенийĕ çапăçу вăхăтĕнче хăйĕн чаçĕнчен татăлнă. Боецсем пĕр минутлăха та çухалса кайман. Вĕсем, нимĕçсем çине гранатăсем вăркăнтарса, тăшманăн ункине çĕмĕрсе тухнă. Çавăн чухне красноармеецсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 20 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен Б. юлташăн партизанла отрячĕ чугунçулăн пĕр участокне минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çинче противникăн бронепоезчĕ сирпĕнсе кайнă. Бронепоездăн пĕр вагонĕ пĕтĕмĕшпех арканнă, икĕ бронеплощадка ӳпĕнсе кайнă, ыттисем рельсăсем çинчен тухса кайнă. Çак катастрофăра нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 120 çын пĕтнĕ. Партизансем темиçе кун хушши çав бронепоезд ӳпĕнсе кайнă вырăна персе тăнă, гитлеровецсене чугунçула юсама паман.

* * *

Нимĕçсен 52-мĕш пехотнăй дивизийĕн 181-мĕш полкĕнчи 4-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Густав Перстдорф çапла каласа кăтартнă: «1942 çулти январĕн 17-мĕшĕнче мана çара мобилизацилерĕç те резерври батальона ячĕç. Эпĕ унта çурма уксах-чăлах, çар службине юрăхсăр 50 салтака яхăн тĕл пултăм. Çапла, тĕслĕхрен, Гергард Фогель тата Гергард Бернаги салтаксем питех те начар кураççĕ, вĕсем пеме пачах та пултараймаççĕ. Апла пулин те вĕсене пурне те манпа пĕрле фронта ячĕç. Кунта эпĕ Германи çарĕ çавтери пысăк сухатусем тӳснине пĕлтĕм. 181-мĕш полкра мĕн пурĕ те 120 активлă штык кăна юлнă. Эпĕ çапла шухăшласа илтĕм: çакăн пек лару-тăрура вăрçа маласса пыни пачах та ăссăр. Эпĕ пулса тăрать, терĕм, вара пĕрремĕш çапăçурах ирĕккĕн тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕç лейтенанчĕ Костена амăшĕ патне çырнă çырура çапла пĕлтерет: «...Кунта Францирен çĕнĕ дивизи çитрĕ. Çав дивизин 5 батальонне поезд çинчен аннă анманах вырăссем çавăрса илчĕç. Çĕнĕ дивизире ĕнтĕ халех пысăк çухатусем, вилнисемпе аманнисем нумай».

* * *

Фашистла ирсĕрсем Смоленск облаçĕнчи Колохмалова ялне пĕтĕмĕшпех юхăнтарса хăварнă. Пур колхозниксене те çаратса тухнă хыççăн нимĕçсем кулянти çуртсене çунтарса тата взрывсем туса сирпĕнтерсе янă. Мирлĕ çынсене нумайĕшне персе пăрахнă. Гитлеровецсем вĕлернĕ граждансем хушшинче çак колхозниксем пур: Ковалев, Короткова, Филатова, Орехова тата аманнă 20 красноармеец. Чĕррĕн хăварнă колхозниксене бандитсем пурне те тыла хăваласа кайнă. Угра юханшывĕ урлă каçнă чухне нимĕçсем пĕр хĕрарăмпа унăн икĕ пĕчĕк ачине кĕпер çинчен аялалла пăрахнă.

* * *

Хыршов сывăхĕнче ларакан румынсен икĕ ялĕнчи çынсем вĕсем патне хресченсенчен тырăпа выльăх-чĕрлĕхе туртса илме пынă продовольстви комиссине хирĕç хĕçпăшалпа тăнă. Хресченсем юлашки тырра пама татăклăнах килĕшмен. Комисси членĕсем пур пек тырра вăйпа туртса илме тăрсан, çав ялсенчи çынсем пуртăсемпе тата шалчасемпе хĕçпăшалланнă та комиссин 7 членне вĕлернĕ.

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 6-мĕш иран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлла улшăнусемех те пулман.

* * *

Архипов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ), противникăн оборона тумалли укрепленийĕсене çĕнтерсе пырса, нимĕçсенне 4 оруди, 7 пулемет, 1.660 снаряд, 432 противогаз тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн кавалерин пĕр чаçĕ, тăшманăн контратакисене ăнăçлăн сире-сире пăрахса, пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 780 çынна тата пĕр танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем хăйсен пехотин чаçне контратакăна кĕртсе янă. Нимĕçсене танксем пулăшса пынă. Пирĕн артиллеристсем тăшман çине тăваллăн пеме тытăннă. Пирĕн батарейăсем персе нимĕçсен 5 танкне çĕмĕрнĕ, нимĕçсен пехотин батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет летчикĕсем-истребительсем Соколов, Красиков, Семенов тата Шеремет юлташсем сывлăшра нимĕçсен 11 истребительне тĕл пулнă. Противникăн йышĕ нумайрах пулнă пулин те, пирĕн летчиксем, тăшманăн самолечĕсене атакăласа, 4 машинăна персе антарнă. Нимĕçсен ытти самолечĕсем çапăçурах тухнă. Пирĕн истребительсем пурте хăйсен аэродромне ăнăçлăн таврăннă.

* * *

Крещеновский лейтенант командир пулса ертсе пыракан танк экипажĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç 60 çапăçура пулнă. Хăюллă та паттăр танкистсем, персе тата гусеницăсемпе таптаса, нимĕçсен танксене хирĕç пемелли 51 орудине, миномётсен 4 батарейине, 3 [illegible] орудине, 7 çăмăл танкне, 5 вăтам танкне тата нимĕçсен салтакĕсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнче нимĕç войскисен тылĕнче кĕрешекен З. юлташăн партизанла отрячĕ, питĕ те кирлĕ çула татса илсе, халăх пурăнакан 5 пунктран нимĕçсен гарнизонĕсене хĕссе кăларнă та çав пунктсенче çирĕпленсе ларнă. Гитлеровецсем çав ялсене каялла тытса илес тесе темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулман.

* * *

Нимĕçсен 257-мĕш пехотнăй дивизийĕн разведка тăвакан отрядĕнчи 2-мĕш эскадронран тыткăна лекнĕ ефрейтор Альберг Арндт çапла каласа панă: «Пирĕн эскадрона пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкрĕç. Унта 140 салтакчĕ. Мартăн 10-мĕш тĕлне эскадронра мĕнпурĕ те 6 çын çеç тăрса юлчĕ. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питĕ япăх. Салтаксем пурте вăрçă часрах пĕттĕрччĕ тесçĕ».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Готфрид сумĕнчи ун патне Мариенвейертан арăмĕ çырнă çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Вăрçă пирки сиксе тухнă асапсене текех чăтса тăма май çук. Инкек-синкекпе хуйхă пĕтĕмпех пĕтерет. Ганс декабрĕн 8-мĕшĕнчен вара çырмасть. Эсĕ те, мĕскĕн Готфрид, урусене тăм илтерсе янă, çитменнине тата санăн ревматизм. Чирлĕ урасемпе санăн текех çапăçма юрамасть. Сана улăштарас пулать. Сана халиччченех улăштарманни вăл тĕрĕс мар япала. Е пурте вилсе пĕтесси патне çитсе тăтăмăр-ши ĕнтĕ? Çакă вăл питĕ хăрушă. Пирĕнпе юнашар лазарет пур, унта алли-урисене тăм илтерсе янă салтаксем выртаççĕ. Мĕн кăна курмарăн-ши унта... Хăрушă япала! Çавнашкал пурнăç çинчен шутланиччен шутламанни лайăхрах, шухăшласан ухмаха ерĕн».

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Совет артиллерисчĕсен паттăр ĕçĕсем

Вырăс артиллерисчĕсене авалтанпах мухтаççĕ. Вĕсен героизмĕ, паттăрлăхĕ туссене мар, тăшмансене те тĕлĕнтернĕ. I Петртан пуçласа Брусилов прорывĕ тунă кунсем патне çитиччченех вĕсен чапĕ çӳлте тăнă. Пирĕн çĕршывăн тăшманĕсем темиçе хутчен те пирĕн артиллерин вăйне хăйсен ĕнси çинче тӳссе курнă. Çав хăвата нимĕç захватчикĕсем те темиçе хутчен те туйса курнă. Вĕсен асламăшĕсен асламăшĕсене 1759 çултах пирĕн паттăр артиллери аркатса тăкнă. Гитлерла йыткĕтĕвĕсене хирĕç çапăçса, пирĕн совет артиллерисчĕсем хамăрăн артиллерин мухтавне татах та ытларах çĕклерĕç. Совет артиллерисчĕсем каллех те каллех хăйсем хăюллă та паттăр пулнине кăтартрĕç. Гитлеровецсем çиçĕм пек хăвăрт таппăнса пире аркатса тăкасшăн пулчĕç. Вĕсем пуриннчен ытла хăйсен бронетанковăй дивизийĕсем çине шаннă. Анчах та вĕсен шанни ахалех пулчĕ. Вĕсен мухтаса пĕтермĕ бронетанковăй дивизийĕсене питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ, çак ĕçре пуринчен ытла пирĕн артиллеристсем мухтава тухрĕç. Вĕсем пуринчен малтан çав бронетанковăй дивизисемпе тĕл пулса, вĕсене паттăррăн, ним хăрамасăр кĕтсе илчĕç. Нимĕçсен çарĕ пынă çул çинче темиçе пин çĕмĕрсе пăрахнă, çунтарса янă танксем сапаланса выртаççĕ.

Акă хăшпĕр эпизодсем: Полянский юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем виçĕ кун хушши татти-сыппипсĕр тăшманăн танковăй атакине сирсе пынă. Нимĕçсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 300 танкне стройран кăларнă. Совет артиллерисчĕсен паттăрлăхне, хăюлăхне нимĕçкер те хавшатайман. Тăшманăн çулне пӳлсе лартнă. Тăшмана таçтан аякран çаврăнса çул тытма тивнĕ. Политрук заместителĕ Серов юлташ орудисен наводчикĕ пулнă. Вăл нимĕçсен танкĕсене хирĕç снаряд хыççăн снаряд ăсатнă. Акă вăл тăшманăн пĕр танкне аркатса тăкнă, унтан тепĕрне, унтан ак виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет, анчах çапла пулсан та, вăл атакăлама пăрахмасть. Ĕнтĕ нимĕçсенне 11 машинине пĕтерсе тăкнă. Серова амантаççĕ, çапах та вăл орудисем патĕнчен пăрăнмасть, çапла тăшман еннелле пĕр снаряд хыççăн тепĕрне ăсатса тăрать. Иккĕмĕш хут пуля лексен кăна Серов хăйĕн ĕçне тума чарăнать — вăл вилет. Герой-артиллерист юнĕ сая каймасть. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 18 танкĕ выртса юлать. Çавсем вĕсем Серов наводчикăн паттăр ĕçĕсем çинчен уççăн каласа тăраççĕ.

Гитлерла йыткĕтĕвĕсем Мускав çинелле ыткансӑн, тăван çĕршыв çакăн пек приказ парать: тăшмана чарса лартмалла, тăван Мускава хӳтĕлесе хăвармалла, Мускав сывăхĕнче нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкма тытăнмалла. Сталинла çак приказа артиллеристсем тĕпренех ăнланса илнĕ. Вилĕпин вилĕпĕр, анчах та тăшман умĕнче пуç таймăпăр, тенĕ артиллеристсем. Хĕрӳллĕ кунсем килсе çитнĕ. Орудисем, батарейăсем пĕр-пĕрипе ăмăртса фашистсене çунтарма тытăннă. Шăп çакăнта ĕнтĕ, Мускав сывăхĕнче, танксене хирĕç пемелли артиллери чаçĕсенче чи пирвайхи гвардейски полксем çуралчĕç те.

Акă майор Ефременко командир пулса тăракан гвардейски полк. Çав полкăн кадрĕ вăрçă пуçланнăранпах фашистсене хирĕç çапăçса пиçĕхнĕ. Гвардеецсем чылай çĕрте, чылай участоксенче хăйсен паттăрлăхне кăтартрĕç. Анчах çапла пулин те, вĕсен геройлăхĕ, вĕсен паттăрлăхĕ уйрăмăнах Мускав сывăхĕнче палăрчĕ. Кунта артиллерист-гвардеецсем фашистсен танкĕсене уйрăмах пĕтерсе тăкрĕç. Пĕр çапăçура кăна пирĕн артиллеристсем танксене хирĕç пемелли орудисенчен персе, нимĕçсен 23 танкне пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çак полк нимĕçсенне 186 танк, 11 бронемашина, 9 оруди, 9 самолет, пехотăн 3 батальонне тата противникăн огневой точкисене сахал мар пĕтерсе тăкнă. Мускав сывăхĕнче нимĕçсен фашистла войскисем темиçе пин салтак, темĕн чухлĕ офицер çухатнă. Тăшманăн чĕрĕ вăйне пысăк çухатусем кӳнĕ çĕрте пирĕн маттур артиллеристсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем сахал мар илсе кăтартма пулать. Хĕрлĕ Çар татти-сыппипсĕр хĕссе пынипе, тăшман чакнăçемĕн каялла чакать. Анчах вăл кашни вырăнтах, халăх пурăнакан кашни пунктрах тытăнса тăма хăтланать. Пирĕн войскăсем пырас çул çинче огневой точкăсем темиçе çĕршер сике-сике тухаççĕ, çав точкăсенче тăшман пытанса ларать. Хамăр пехотăна малалла кайма çул уçса пултăр тесен, çав огневой точкăсене, хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнсене аркатса-аркатса тăкас пулать. Çак задачăна пирĕн артиллери пурнăçлать. Тăшмансен укреплениййĕсене пĕтерсе тăкма тăрăн юр та, шартлама сивĕ те-нимĕн те пирĕн артиллерие чăрмантараймасть.

Пирĕн артиллеристсем час-часах уçă позицисенчех переççĕ. Кун пек тăвас тесен ĕçе тĕплĕн пĕлни, нимĕçрен хăрамании, çухалса каймании кирлĕ. Тăшман пульлисем çумăр пек çуса тăнă чухне, тăшманăн миномечĕсемпе артиллерийĕ вут çунтарса тăнă чухне ĕçлес пулать-çке-ха. Анчах пирĕн паттăр артиллеристсем хăрамаççĕ, снаряд хыççăн снаряд тăшман çине яраççĕ.

Акă уçă позицирен пенĕ чухнехи хăшпĕр тĕслĕхсем. Çапăçу Б. ялĕшĕн пынă. Çав ялта тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнĕ пулнă. Тăшман бетон никĕслĕ арман патне шултра калибрлă икĕ пулемет тата 4 станковăй пулемет лартнă, вĕсем патĕнче 70 автоматчик вырнаçнă. Ял патне пымалли çулсем çине тăшман татти-сыппипсĕр вут пĕрĕхтерсе тăнă. Н-ски полкăн батарейин командирне, старши лейтенант Запорожеца тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнне тата огневой точкисене пĕтерсе тăкма задани панă. Çав задание хупă позицирен персе пурнăçлама пăхни ăнăçлă пулайман. Вара Запорожец юлташ йывăр гаубицăна уçă позицие кустарса тухма приказ панă. Паттăр артиллеристсем, тăшман персе тăнине пăхмасăр, гаубицăна уçă çĕре илсе тухса, тăшманăн укреплениййĕсем çине 400 метрлă дистанцирен пеме тытăннă. Тăшман артиллеристсем çине хăйĕн миномечĕсенчен вут-çумăр çутарма тытăннă. Оруди çине 180 мина кăларса янă. Хăюллă артиллеристсем çапах та чакман. Тӳррĕн персе тăшманăн шултра калибрлă пĕр пулеметне тата икĕ станковăй пулеметне çапса аркатнă. Кунсăр пуçне фашистсен 20 автоматчикне пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарма хăтланнă, анчах та пирĕн пехота вĕсене тартман. Çапла вара халăх пурăнакан пункт пирĕн алла куçнă.

Отечественнăй аслă вăрçăн историне сахал мар мухтавлă ĕçсемпе пуянлатрĕç артиллеристсем. Хĕрлĕ Çар оборона тытса пырса çапăçнă вăхăтра та, халĕ, тăшман каялла, хĕвеланăçнелле чакнă вăхăтра та совет артиллерисчĕсем хăйсен калама çук пысăк хăюлăхне, геройлăхне кăтартрĕç. Тăшмансем вĕсенчен темрен хăрана пек хăраççĕ.

Тыткăна илнĕ Рудольф Фигнер, нимĕç çарĕн старши ефрейторĕ, çакăн пек каласа панă: «Çапла, çав вăхăт тамăкри пек пулчĕ. Çав тамăк пилĕк каçа пычĕ. Çав пилĕк каçра пирĕнтен пĕри те куç хупмарĕ, çапăçма мар, çĕр çинчен тăраканни те пулмарĕ. Вырăс артиллерийĕпе вырăс авиацийĕ пурне те пĕр çĕре хутăштарса пăтратса тăкрĕ: çĕр те, этемсен виллисем те, ванчăк тупăсем те — пурте пĕр çĕре хутăшса кайса, пĕр купа пулчĕç. Ротăра манăн юлташсем пĕри те юлмарĕç».

Сталин юлташ та, пирĕн правительство та, пĕтĕм совет халăхĕ пирĕн маттур артиллеристсем çине ăшăран та ăшă куçпа пăхаççĕ. Хамăрăн тăван çĕршывăмăрăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте, пирĕн артиллеристсем татах та татах хăйсен паттăрлăхĕпе геройлăхне кăтартĕç.

Бригаднăй комиссар **ПРОЧКО.**
(«Правда»).

Пулеметчик Андрей Кучков

Андрей Кучкова Хĕрлĕ Çара илни виçĕ уйăх çитет. Çак вăхăтра вăл пулемета тыткалама тата пулеметран пеме те лайăх вĕренсе çитнĕ. Тактикăллă занятисем ирттернĕ вăхăтра Кучков хăй пенĕ патронсемпе пурне те мишене лектерсе «отличнăй» паллă илчĕ.

Кучков Хĕрлĕ Çар ретне киличчен пĕр чугунçул станцинче железнодорожник пулса ĕçленĕ. Ун чухне вăл, пуриччен ытла, вăрçăсемпе çар пурнăçĕ çинчен кăтартакан кинофильмсене курма юратнă.

— Эх, мана «Чапаев» кинокартина питех те кăмăла каять! Вăт çав Чапаев пек герой пуласчĕ, пулеметран та çавăн пек пеме вĕренесчĕ,—терĕ пĕррехинче Кучков каннă хушăра боец-юлташĕсемпе калаçса ларнă чухне.

«Чапаев» кинокартина Кучкова тăнипех те нихăçан асран каймин хумхантарнă пулмалла. Вăл хăйне кирек хăçан та В. И. Чапаев пек хастарлăн тыткалать, пуçĕ çинчи çĕлĕкне те Чапаев пек чалăшшăн лартса çӳрет.

— Кучков юлташ, сана пурте маттур боец тесе шутлаççĕ. Санăн ĕçӳсем те, сăмахусем те большевикăнни пекех. Анчах мĕншĕн-ха эсĕ коммунистсен партине кĕместĕн?—терĕм эпĕ ăна пĕррe сăмах майăн.

Кучков ман çине тинкерсе пăхса илчĕ те ерипен кулса хучĕ:

— Партие кĕресси çинчен эпĕ тахçанах шутланă ăна. Анчах та хама хатĕрленсе çитнĕ пек шутламан. Пăртак тăхтас-ха. Фронта çитсен, вăрçа кĕрес умĕн заявлени çырса парăп...

Халĕ ĕнтĕ пирĕн рота фронтра. Эпир фронтăн пĕр участокне йышăнса тăратпăр.

Тĕксĕм кун. Каç пулса çитет. Çанталăка тĕттĕм сăнĕ çапнă. Андрей Кучков хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле ответлă вырăнта хуралта тăрать. Вĕсен умĕнче—станковăй пулемет. Сасартăк сывлăшра самолет сассисем илтĕнсе кайрĕç.

Нимĕç самолечĕсем пирĕн тыл еннелле вĕçсе пыраççĕ. Тăшман пире курмасть, мĕншĕн тесен эпир тĕплĕн пытанса ларнă. Самолетсем пирĕн позици урлă каçса кайсан Кучков пулемет йăвинчен тухсах вĕсене сывламасăр пăхса тăрать.

— Таçта бомбăсем пăрахма кайрĕç ĕнтĕ,—тесе пăшăрханать пирĕн Кучков.

Анчах та нимĕç самолечĕсем нумаях каймарĕç, пирĕн позици ыйçине десант антарма пуçларĕç. Кучков пулемет пĕтĕçине десант анакан еннелле çавăрса лартрĕ.

Пирĕн командир сиксе тухрĕ.—Астăвăр, юлташсем, команда памасăр ан перĕр,—терĕ вăл.

Сасартăк ракета сутатса ячĕ. Сывлăшра парашютпа анакан нимĕç салтакĕсем курăнса кайрĕç. Пирĕн прожекторсем ялтăртатма пуçларĕç. Çӳр çине сывхаракан парашютистсем кăнтăрлахи пекех курăнаççĕ.

Команда сасси янăраса кайрĕ. Вăл десантпа анакансем çине пеме хушать.

Пулеметсем шатăртатма тытăнчĕç. Винтовкăсенчен те переттĕр. Çĕр çине анса ларакан парашютистсене Кучков пулемечĕ пĕр шеллемесĕр сăптăрать. Çур сехете яхăн петĕмĕр. Парашютистсенчен аяккалла таракан пĕр мĕлке те курăнмасть.

Десант аннă çĕре каятпăр. Унта 45 фашист вилли кăна выртать. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсем çумĕнчи парашючĕсене салтма та ĕлкĕреймен, çапличех пĕтнĕ.

— Кунта пуриччен ытла Кучков юлташ лайăх сăптăрчĕ вĕсене,—тесе палăртрĕ пирĕн командир.

Тепĕр кунне нимĕçсем çине наступлени турăмăр. Вĕсене виçĕ ялтан хуса кăлартăмăр. Кунти çапăçусенче те Кучков пулеметчик хăйне палăртрĕ. Противникăн тĕреклетнĕ позицийĕсем патне маттуррăн та хăюллăн сывхарса, майлă вырăнсене йышăнса илсе, Кучков нумай фашистсене çулса тăкрĕ. Çакăншăн ăна начальство мухтарĕ.

Тата тепĕр кунран Андрей Кучков ВКП(б) ретне кĕме заявлени çырса пачĕ.

— Мана тăшмана хирĕç çапăçма пултаратăн тетĕр пулсан, халĕ ĕнтĕ эпĕ коммунист пулма та тивĕçлĕ пулĕ тетĕп,—çирĕппĕн каларĕ вăл хăйĕн заявленине панă чухне.

Паллах, çĕршыв тăшманĕсене хирĕç Андрей Кучков пек хăюллăн та пултаруллăн çапăçакан боецсене епле партие илмесĕр хăварăн? Ăна çав кунсенчех коммунистсен парти ретне илчĕç.

Политрук **М. ДАНИЛОВ—ЧАЛДУН.**
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Танксен десанчĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем, пĕр яла тытса илсе, унта боевой техника нумай пухса тăратнă тата пысăк гарнизон хăварнă. Пирĕн Н-ски чаçăн командованийĕ çав яла фашистсем кĕтмен çĕртен танксен йышлă та вăйлă десантне илсе пырса антарнă. Десант хыççăн яла пирĕн пехотинецсем çĕмĕрсе кĕнĕ. Красноармеецсен пĕр пайĕ çийĕнчех нимĕçсен оруди расчечĕсемпе пулемет расчечĕсем патне ыткăннă, ыттисем тăшманăн пехотипе çапăçма тытăннă. Гитлеровецсен сборкине пиçĕ [illegible] боецсем кĕтмен çĕртен тата хăвăрт пырса çапнипе нимĕçсене хирĕç тăма паман.

Çапăçу тăшмана тĕппипех аркатса тăкнипе вĕçленнĕ. Урамсенче тата çуртсем çумĕнче нимĕçсен 25 вилли выртса юлнă. Пирĕн алла 4 йывăр оруди, 6 противотанковăй оруди, 7 пулемет, 5.000 снаряд, 120 винтовка, 20.000 патрон лекнĕ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Фашистсен авиацин пысăк çухатăвĕсем

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн авиаци тăшмана пысăк çухатусем кӳрет. Пĕр кун хушшинче кăна сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 12 самолетне персе антарнă, вĕсенчен 9-шĕ «Мессершмитт-109» йышши самолетсем. Çав кунах пирĕн бомбардировщиксен группи тăшманăн аэродромĕ çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă. Аэродром çинче «Юнкерс-52» йышши виçĕ моторлă транспортнăй самолетсем тăнă. Сасартăк пырса тапăнса, пирĕн бомбардировщиксем тăшманăн 24 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Авиацин пĕр чаçĕн летчикĕсем тăшманăн пехотине пĕтерсе пырса, кун каçиччен пирĕн çĕр çинчи войскăсене малалла куçма пулăшса пынă. Штурмовой авиаци нимĕçсен пĕр танкне, 20 автомашинине, çар пурлăхĕсем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç пехотин икĕ ротине вĕлерсе пĕтернĕ.

И. ДЕНИСОВ.

Нимĕç самолечĕсем Ленинград çине вĕçсе пырса тапăнни

Апрелĕн 4-мĕшĕнче каçхине нимĕç самолечĕсем Ленинград çине вĕçсе пырса тапăннă. Пирĕн зенитнăй батарейăсем персе тăнипе тата истребительнăй авиаци ăнăçлăн кĕрешнипе противник самолечĕсен пысăк пайне сапаласа янă та Ленинград çине вĕçсе çитме паман. Пирĕн зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 13 бомбардировщикне персе ӳкернĕ, пирĕн истребительсем нимĕçсен 5 бомбардировщикне персе антарнă, пĕтĕмпе çав тапăнура нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне тата пирĕн зенитнăй артиллери тăшманăн нимĕçсем йышăннă территори тĕлĕнче явăнса çӳренĕ 13 бомбардировщикне персе сиенленĕ.

Тăшманăн хула çине вĕçсе çитнĕ пĕччеҫшер самолечĕсем халăх пурăнакан кварталсем çине бомбăсем тĕлли-паллисĕр пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем пур. Сывлăшран тапăннă пирки панă тревога пĕр сехет хушши пынă.

М. ялне вăхăтлăха йышăнса илнĕ хыççăн фашистла ирсĕрсем вырăнти халăха çавтери тискеррĕн асаплантарнă. Афанасьева колхозницăна роэтĕпа хĕненĕ. Амăшне çавăн пек асаплантарнăшăн нимĕçсене тавăрма Афанасьева Вара вăл нимĕçсем йышăнса тăракан ялтан тухса тарнă та Хĕрлĕ Çарăн истребительнăй отрядне пырса кĕнĕ. Отрядпа пĕрле Вася Афанасьев та фашистсенчен ирĕке кăларнă тăван ялне пырса кĕнĕ. Çамрăк Вася хăй тупа шĕн тавăрса ку таранччен 28 гитлеровеца пĕтернĕ. Ăна сержант званине панă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Вапăла пуçланă Елизавета Ивановна юлташăн ывăлĕ Вася тупа тунă. Кĕтнĕ кун çитнĕ. [illegible]

Ӳкерчĕк çинче: НИМĔÇ ИРСĔРĔСЕНЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ТĂВАН ЯЛТА. 1. Вася Афанасьев амăшне йăпăтса пулать. 2. Вася Афанасьев хăйсен килĕнче.

Г. ПЕТРУСОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Агитаци ěçне хакламан çěрте

КАЛИНИНО. Çавалкасри вулав çуртěн заведующийě комсомолец И. Александров юлташ вулав çуртěн ěçне палăрмаллах вăйлатрě. Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ěçне вулав çуртě çумěнчи агитколлективпа тивěçлипе туса пынипе Çавалкас ялсоветне кěрекен колхозсем авăн ěçěсене районра чи малтан вěçлерěç. Кунсăр пуçне ытти ялхуçалăх ěçěсене те вăхăтра пурнăçларěç. Государство умěнчи парăмсене вăхăтра татса пыраççě. Ялхуçалăхпа политикăллă кампанисене активлăн хутшăнаççě. Хěрлě Çара тата фронта пулăшас ěçе хавасланса тăваççě т. ыт. те. Вулав çуртě çумěнче стена хаçачě йěркеллěн тухса тăрать, драмкружок, ПВХО тата ГСО кружокěсем ěçлеççě. Çак кунсенче драмкружок коллективě «Патриоты» пьесăна вылясса панě.

Вулав çуртě çуралтине хатěрленес ěçре колхозниксене нумай пулăшать. Вулав çуртě çумěнче çуракине хатěрленес, ăна кěске срокра ирттерес тěлěшпе ěçлекен комисси уйăрнă. Комисси активлăн ěçлет.

Çавалкасри вулав çуртěн паха ěçěсемпе паллаштаракан пěрлех, эпир пěр агитатор та курăнман Сăкăт ялсоветě çинчен калассăн. Кунта иртнě ноябрь уйăхěнчен пуçласа ялсоветне кěрекен виçě колхозěнче те клубсем пачах та ěçлемен. Сăкăтра вулав çуртě уçмалла пулнă, анчах ялсоветě вулав çуртě çине çавăрăнса та пăхмасть, вулав çуртěн заведующине тупма тăрăшмаççě. Клубсем çумěнче е ялсоветě çумěнче агитколлектив пулмалла. Сăкăт ялсоветěнче вăл çук. Массăллă-политикăллă ěçе кунта никам та йěркелеме тăрăшмасть. Çакна пула хуçалăхпа политикăллă кампанисем те Сăкăт ялсоветěнче начар пыраççě. Тěслěхе илсен, кунта укçа-тенкě парăмěсене парса татасси, ăш-какай, сěт-çу обязательствисене пурнăçласси кайри вырăнта тăрать. Кунта ăш-какай обязательствисене пěлтěр вăхăт хушши татманнисем те йышлă вара. Вăрçă вăхăтěнчи налога пухасси те çавăн пекех начар пырать. Государство умěнчи парăмсене вăхăтра татса пыманнипе пěрлех колхозсем ялхуçалăх ěçěсене вěçлес тěлěшпе те кая юлса пыраççě. Авăн çапса пěтерме, авăна халě те сўрěккěн çапаççě. Мěншěн капла начар ěçлерěç-ха Сăкăт ялсоветěнче? Е кунта политпросвет учрежденийěсенче ěçлеме пултаракан çынсем çук, е агитаторсем пулма пултаракан çынсем çук? Ěçлеме пултаракан çынсем кунта сахал мар. Ялсоветěнче 9 учитель. Анчах та учительсем ялти общественлăллă ěçе питě те сахал хутшăнаççě. Чылайěшěсем шкулти ěçрен пуçне урăх нимěн те тумаççě, халăх хушшинчи хисеплě ěçрен пăрăнаççě.

Тăван çěршыва, фронтра тата тěнчере çавтери паллă ěçсем пулса пыраççě. Сăкăт ялисполкомěн çав ěçсемпе событисем çинчен кашни колхозника ăнлантарса парассишěн тăрăшмалла. Ялсоветěн политикăллă-массăллă ěç çине сўрěккěн пăхмалла мар. Ку ěçе тивěçлипе йěркелессишěн пуринчен малтан ялсовет председателěн çине тăмалла.

Г. МАТВЕЕВ.

Черепица заводěнче

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Йěпреç вăрманě урлă каçсанах Тăмаллă Выçли ялě сарăлса ларать. Ялăн тепěр айккинче уйсем тăсăлса выртаççě. Ялти çынсем вăрман ěçлесе тата тырпул туса илсе пурăннă. Таврара фабрикăсемпе завод таврашěсем пулман. Нумайěшě ăна курман та.

Юлашки ик-виçě çул хушшинче Тăмаллă Выçли ялěн сывăхěнче черепица заводě ўссе ларчě. Ирсеренех завод трубинчи кăшкăртса çынсене вăратать. Рабочисем васкаса завода ěçлеме каяççě.

Иртнě çулсенче заводра кирпěчпе черепица çапнă. Ěçе пуçласа яма çăмăлах пулман. Ку ěçе пěлекен çынсем çукчипе кадрсем вěрентсе хатěрлемелле пулнă. Халě вырăнти çынсенченех квалификациллě рабочисем ўссе ситěнчěç. Иванова станокпа кирпěч çапас ěçе вěренсе çитнě. А. Рамская та станокпа кирпěч çапать. Вěсем ик-виçě çын вырăнне ěçлеççě. Куллен 8 çын 750 кирпěч çапмалла пулсан, вěсем 900 кирпěч çапаççě, çавăн чухлех черепица тăваççě.

Ку тавраври ялсем валли чўлмексем ытти çěртен турттарса килнě. Çав вăхăтрах вěсене кунта та тума май пулнă. Халě заводра чўлмек тăвакан цех ěçлет. Чўлмексем тăвас ěç ăнăçлăн пулса пырать. 1942 çулăн малтанхи çурçулěнче 12 пин литр кěмелěх чўлмексем туса кăлармалла пулнă пулсан, 3 уйăхра 13 пин литр кěмелěх туса кăларнă. Чўлмек тăвакансенчен уйрăмăнах М. В. Кузин юлташ пултаруллăн ěçлет.

Заводра стахановецсен йышě ўссех пырать. Чылайěшě ик-виçě профессие вěренсе çитеççě. Машинист В. Иванов юлташ шăвăçран кукăсем тăвать. Вăл рационализаторла сěнўсем парса пусăран шыв кăларас ěçе механизациленě. Ун вырăнне алăпа шыв çěклес пулсан, кунěнех пěр çын ěçлемелле. Пусăран шыв кăларассине механизациленни çулталăкне 2.600 тенкě перекетлеме май парать.

Çав тухсан завод çумěнче хăма çуракан рама ěçлеме тытăнмалла. Çак кунсенчех кирпěч катса тăмалли машинăна ěçе кěртеççě. Вăл 5 çын вырăнне ěçлемелле. Малашне чылай ěçе механизацилеççě.

В. ВИКТОРОВ.

ПЛАНСЕМ ТУНИПЕХ ĚÇ ПĚТМЕСТ

ÇĚРПУ. (Хамăр корр.). Иртнě çулта районри предприятисемпе артельсем ěçсыннисем валли куллен кирлě таварсем туса кăларас тěлěшпе начар ěçлерěç. Апакассинчи, Хорисорти тата Тусинчи артельсем 1941 çулта куллен кирлě таварсем туса кăлармалли плана 60—70-шер процент, «Перламутр» артель арçынсемпе хěрарăмсем валли ăпă-пушмак туса кăлармалли плана 32 процент çеç тултарнă. Çавнашкалах районри апат-çимěç комбиначě те кăвас тата морс туса кăлармалли плансене тултарайман.

Райплан вырăнти чěртавартан ěçсыннисем валли куллен кирлě япаласем 1942 çулта туса кăлармалли çěнě план хатěрленě. Çак план тăрăх райлесхозăн çуна тупанěсем, леспромхозăн клепкăсем, райпромкомбинатăн катка-пичкесем, кўршек-чўлмексем, Туçинчи артелěн корзинкăсем, Апакассинчи артелěн йывăç калăксем, Урай шăлмалли щеткăсем, районри апат-çимěç комбиначěн сахăр сиропě т. ыт. те туса кăлармалла. Çěнě таварсем туса кăларма райпромкомбинатăн, апат-çимěç комбиначěн тата «Перламутр» артелěн çěнě цехсем организацилемелле.

1942 çула кěнěренпе 3 уйăх иртрě. Апла пулин те пěр предприяти те, пěр артель те ěçсыннисем валли куллен кирлě таварсем туса кăларма тытăнман.

Чурачăк ялсовечě юлса пырать

ÇĚРПУ. Чурачăк ялсовечě государство умěнчи обязательствăсене тултарас енěпе районра чи кайри вырăнта тăрать. Паянхи куна ялсовета кěрекен ялсенчи 91 хуçалăх государствăна 1941 çулшăн аш-какай, сěт-çу, çěрулми, укçа-тенкě парса татман. Кунта ялсовет депутачěсемпе активсем те хăйсен парăмěсене вăхăтра татмаççě. Акă, «Броневик» колхоз председателě Е. Куропаткин 1941 çулшăн государствăна 19 килограмм аш-какай, 100 килограмм ытла çěрулми леçсе паман.

Чурачăк ялсовечě кая юлса пыни çинчен райсовет исполкомěн ларăвěнче тата ытти çěрте те чылай каласнă, решенисем те йышăннă. Апла пулсан та, ялсоветěнче нимěнле улшăну та курăнмасть. Ěç вырăнтан хускалмасть.

Чурачăк ялсовечě кая юлса пыни ялсовет исполкомě активпа таччăн çыхăнса ěçлеменнинчен тата районри организацисем пулăшса пыманнинчен килет. Ку ялсоветне заготовка енěпе ěçлекен организацисенчен 2—3 уйăх хушшинче пěр представитель те пырса курман.

Ялсовет исполком председателě Филиппова юлташ ěçре çěнě çын. Ăна пулăшса, вěрентсе пымалла. Районри организацисем енчен Чурачăк ялсоветне халех ěçлě пулăшу кирлě.

Г. ПЕТРОВ.

МОПР организацийěсем аманнă боецсене пулăшаççě

ХĚЛЛЕЙ. Нимěç оккупанчěсене хирěç пыракан отечественнăй вăрçă вăхăтěнче МОПР организацийěсене вăйлатса, тăшмансене хирěç кěрешме массăна мобилизацилесси питех те пысăк ěç пулса тăрать. Кăçал, МОПР-ăн районри комитечěн кизě составне улăштарса çěнетнě хыççăн, ку ěç чăннипех малалла кайни палăрчě. Кěске вăхăт хушшинчех вырăнсенчи МОПР организацийěсем хăйсен ěçěсене вăрçă вăхăчě ыйтнă пек урăхлатса çěнетрěç. Паянхи куна районěпе 357 çынна МОПР членне çěнěрен илнě. Уйрăмăнах МТС тата районри «Колхозник хаçачě» редакци çумěнчи МОПР организацийěсене палăртмалла. МТС-ра пурě 55 çынна МОПР членне илнě.

Районри колхозсенче çěнěрен йěркеленнě МОПР организацийěсем нумай. Ку ěçе пуринчен ытла комсомолецсем туса пыраççě. Комсомолец И. Григорьев — Сыпайкасси ялсоветне кěрекен колхозра, В. Остеров — 3 колхозра, Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкулти комсомолец-учительсем тăрăшнипе 5 колхозра МОПР организацийěсем тунă. Халě çак МОПР организацийěсем аманнă боецсене пулăшма колхозсенче укçа пухас ěçе пуçарса ячěç. Доронин ячěпе тăракан колхозра 24 çынна МОПР членне кěртнě, вěсем аманнă боецсем валли 69 тенкě пухса панă.

«Тимěр-сырми» колхозра комсомолецсемпе çамрăксенчен пример илсе, çитěнně колхозниксем те укçа пухас ěçе хутшăнчěç. Егор Плещаков 52 çулта. Вăл колхоз счетоводě пулса ěçлет. Унăн ывăлě Иван вăрçă пуçланнăранпах фронтра тăшмана хирěç кěрешет. Хастарлă старик, МОПР кěнекине алла илсе, аманнă боецсене пулăшма 6 тенкě укçа панă. Плещаков пеккисем ялта татах та пур.

Районри хаçат редакцийěнче ěçлекенсем аманнă боецсене пулăшма 55 тенкě укçа пухнă. Районěпе шутласан, аманнă боецсене пулăшма МОПР организацийěсем 400 тенкě ытла пуçтарнă.

А. МИХАЙЛОВ.

Урхамахпа каччă

Колхоз хура лаши, ай, кěçенет,
Ик урипе çěре вăл тěпретет;
Тăшманпа çапăçма каяс тесе
Çěр тěпретет, —
Тěпретет çěр колхоз хура лаши.

Колхоз маттур каччи ут йěнерлет,
Хура урхамахпа çил вěçтерет;
Чаплă кавалерист пулас тесе
Çил вěçтерет, —
Вěçтерет çил маттур колхоз каччи.

П. ДОКТОРОВ.

Укерчěк çинче: ялхуçалăхěнче малта пыракансен республикăри канашлăвăн делегачěсем: 1. «Новый быт» колхозăн уйхир бригадин бригадирě **А. М. Юхтанова** юлташ. 2. «Малый Цивиль» колхозăн фермисен заведующийě **М. Т. Купчикова** юлташ. МОХОВ фотоўкерчěкě.

Вăйлă тырпул пухса илесси паха вăрлăхран килет

Вăйлă тырпул пухса илес тесен — çак районшăн, çак çěршěн мěнле вăрлăх паха, çав вăрлăха акас пулать. Вăрлăха ителěклě таран пухса хатěрленипе ăна лайăх ланканма юрамасть, çав вăрлăхăн пахалăхě мěнле пулнине те асăрхас пулать. Пур енчен те лайăх тырра кăна вăрлăх валли уйăрса хăварас пулать.

Пуринчен ытла çакна асăрхас пулать: вăрлăха хăварнă тырă час шăтаканни, чи парка тěшěлли, чи вăйли пултăр.

Час шăтайман тěштырă вăрлăхěнчен пучахěсем те имшеркке, вăйсăр пулаççě. Час шăтайман вăрлăх гектар пуçне ытларах акма лекнипе кăна мар начар, унăн тěп сиенě çакăнта: вăл вăрлăхран час-часах тырпул та япăх пулать.

Çавăнпа та ěнтě кашни колхозăнах, кашни совхозăнах тěштырă вăрлăхěн пахалăхě мěнле пулнине тимлěн асăрхаса пăхмалла.

Иртнě çулта Çěпěр тата Çурçěр Казахстан районěсенче, çуркунне каярах юлса килнипе тата çăвě те ытла ăнлах пулманнипе, тырăсем час шăтса час ěлкěреймерěç. Çавăнпа та уйрăм колхозсемпе совхозсенче ытлашши нўрлě тыррах вăрлăхлăх хăварнă фактсем те палăрчěç. Çавнашкал колхозсемпе совхозсен вăрлăхěсен вăйě кěркуннепе хěлле иртиччен ěнтě сахал мар чакнă. Ун пек вăрлăхсем вырăнне çěнě вăрлăхсем, вăйне çухатман, час шăтса тухма пултаракан вăрлăхсем туянма тăрăшмалла.

Лайăх вăрлăха шырама таçта инçете каяс пулмасть, малтан харпăр-хăйěн колхозěнчех, харпăр-хăйěн районěнчех шыраса пăхас пулать.

Агрономсене, колхозсене, совхозсене эпир çуркуннехи культурăсен вăрлăхне çеç мар, хăйсен мěнпур пек тыррисене пěтěмпех хăвăртрах тěрěслесе пăхма, вěсем мěнле шăтма пултарнине тěрěслесе пěлме сěнетпěр. Çакă та пулма пултарать: вăрлăх участокěнчен пухнă тырăсем ахаль çиме кăна хăварнă тырăсенчен те начартарах шăтаканнисем пулма пултараççě.

Пěлтěр Çěпěрте тата Çурçěр Казахстан районěсенче маларах — август уйăхěн вěçěнче тата сентябрь уйăхěн пуçламăшěнче — пухса илнě тырăсем каярахпа вырса илнě тырăсенчен лайăхрах шăтаççě.

Тырра çапман, вăл капанра тăрат пулсан, хăвăртрах çапттарас пулать. Çак ěçе организациленě хушăрах тата çакна тума сěнетпěр: кашни капанран пучахсем илсе шěкěлчесе, вěсен пěрчисем мěнле шăтнине хăвăртрах тěрěслес пулать.

Халех калама пулать — пěлтěр вырса илнě тырăсем пурте, вěсене шăнтма тытăниччен вырса илнě пулсан, лайăх шăтмалла. Капанран илнě тырă мěнле шăтнипе тěрěсленě чухне çакна асра тытмалла: хăшпěр чухне, ир сивěтекен районсенче, тырă пěрчи хăйěн лăпкă тапхăрěнчен тухайман пулать. Тырă пěрчи, вырнă хыççăнах сивве лекнипе, шăтма хатěрленсе çитеймен пулать.

Çавăнпа та капанран илнě тырă мěнле шăтнине тěрěсленě чухне вăрлăхăн пěр пайне шўтермесěр пўлěмри условирех усрас пулать. Акма уйăрса хунă вăрлăх лайăх шăтсан, пўлěмри условире усрасси вара кирлě те пулмасть. Акма уйăрса хунă вăрлăх, пăхма хăй паха пулсан та, лайăх шăтмасан, вара çав пўлěмри условире пěр 5—7 кун усранă пěрчěсене акса пăхмалла. Капла та начар шăтсан, вара ку тырă пěрчисем юрăхлă мар пулнине пěлтерет, çавăнпа вěсем шăтмаççě те.

Хăшпěр чухне вăрлăх участокěсенчен пухнă тырăсем çиме хăварнă тырăсенчен те начартарах шăтаççě. Çавăнпа та колхозсемпе совхозсем, агрономсенчен пулăшу илсе, хăйсемех мěнпур пек тырăсене хăвăртрах тěрěслеме, вěсем мěнле шăтма пултарнине сăнаса пăхма тăрăшмалла, начар вăрлăхсем вырăнне лайăх вăрлăхсем тупса хумалла.

Вăрлăха тěрěслекен станцисем çак ěçе хăйсем халлěн кăна туса ěлкěреймěç. Çавăнпа та эпир колхозсемпе совхозсене хăйсене те çак ěçе хутшăнма сěнетпěр.

Лайăх шăтакан тырă тупсан, çав тыррăн тěслěхне вăрлăха тěрěслекен станцисене тăратмалла. Станцире вěсене тепěр хут тěрěслесе пăхса тěрлě анализсем тăвěç.

Колхозсем хăйсен çиме хăварнă тырриссем вăрлăха юрăхлă пулнине пěлсен, ытти колхозсене те, вăрлăха хăварнă тыррисем начар сортлă колхозсене те тыррисене улăштарса, пысăк пулăшу пама пултарěç.

Вăрлăхсене лайăх тасатни кирлě, вăрлăх пур енчен те çуракине хатěр пулмалла.

Вăрлăх кашни колхозăнах, кашни совхозăнах хăйне кирлě таран пулмалла тата кăçал çак ěç çине уйрăмăнах тимлěн пăхни кирлě. Колхозсемпе совхозсем 1942 çулта вăйлă тырпул илесси пуринчен ытла çакăнтан килет те ěнтě.

Академик Т. Д. ЛЫСЕНКО.

Ěçе юратни çеç кирлě

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Вăл кун çанталăк усал пулчě. Иртен пуçласа каçченех çил-тăман йăсăрланса тăчě. Çапах та район центрěнчи клуба çынсем нумай пухăннă. Кунта сывăхри колхозсенчен те, инçетри колхозсенчен те делегатсем килнě. Вěсем хушшинче паллă бригадирсем, овощеводсем, конюхсем, скотниксем. Вěсем кунта ялхуçалăхěнче малта пыракансен районри канашлăвне пухăннă.

Сцена çинче тăракан вăрăм сěтел тавра президиум членěсем лараççě. Хěрлě хăмач витнě сěтел çинче юр пек шурă кролик сиккелесе çўрет. Трибуна умěнче Йěпремри «Чамыш» колхоз членě Осип Степанович тăрать. Вăл аллипе тěллесе кăтартса залра ларакан çынсене вăрăм хăлхаллă кролик çинчен каласа парать.

Осип Степанович нимěнле ěçрен те хăраса тăмасть. Вăл кирек мěнле ěçе те юрататъ, яланах тěплěн тума тăрăшать. Колхоз правленийě Осип Степановича 1936 çулта колхозăн пыл хурчěсене пăхма хушнă. Ун чух пěтěмпе те 8 вěлле çеç пулнă. Паянхи куна Осип Степанович пыл хурчěсене 8 вěллерен 52 вěллене çитернě.

«Чамыш» колхоз 1941 çулта «Ангорски» йышши кролик амисене 16 пуç туяннă. Колхоз правленийě кроликсене пăхма Осип Степановича хушнă. Çу каçиччен вăл 16 амаран 248 çăвăр илсе çитěнтернě, колхоза 10 пин тенкě тупăш панă. Çак хисеплě ěçшěн Осип Степанович ěçкунě çумне хушса 11 çăвăр, 382 тенкě укçа тата 470 грамм кролик мамăкě илме тивěçлě пулнă.

— Кроликсене пăхма, — тет Степанов юлташ, — питě çăмăл. Кролик нумай çимест, ăна ěрчетме çуртйěр нумай кирлě мар. Çав хушăрах кролик пысăк тупăш парать. Пěр кроликран çулталăкра пин тенкě таран тупăш илме пулать.

Степанов юлташ районри пур колхозсене те кăçал кролик ěрчетме сěнчě.

(Хамăр корр.).

Районри комсомолецсемпе çамрăксем çураки умěн

Çуркунне сывхарса килет. Часах хěрў ěç пуçланмалла. Çуракине тухма лайăх хатěрленсе çитессишěн комсомолецсен халě ирми-канми ěçлес пулать. Çуракине кěске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерес ěçре кашни комсомолецăн, комсомолкăн хăйне тивěçлě вырăн йышăнмалла, вăйлă тырпулшăн кěрешекенсем пулмалла.

«Комсомолецсем ялта — пысăк вăй. Çак вăя организацилесен, комсомолăн колхозри организацийě хăйпе пěрле çамрăксене кăна мар, çитěннě колхозниксене те ертсе кайма пултарсан, вăл çуракине ирттерес ěçре, паллах, çитěнў туса пултарать» (Калинин).

ВЛКСМ Красноармейски райкомě мěнпур çамрăксен хăйне 1942 çулта пирěн ялхуçалăхě умěнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçланă çěре мобилизацилет.

ВЛКСМ райкомěн январěн 10-мěшěнче пулса иртнě пленумě комсомолецсемпе комсомолкăсен çуракинчи задачисене, вăл задачăсене пурнăçламалли майсене сўтсе явре. Пленум комсомолăн пуçламăш организацийěсем колхозсен производствăллă ěçěнче малти ретре тăма тивěçлине, çуракине кирлě пек хатěрленсе ирттерессишěн комсомолăн ответлă пулмаллине кăтартса панă.

Пленум кăтартăвěсене пурнăçлас тěлěшпе комсомолăн районри пуçламăш организацийěсем хăйсен ěçне чылай вăйлатрěç, пуçаруллăн ěçлеме пуçларěç.

Ялхуçалăх машинисене тата инвентарьсене юсас тěлěшпе комсомолецсемпе çамрăксен уйăхлăхě пулса иртрě. Çак уйăхлăх вăхăтěнче комсомолецсемпе çамрăксем колхозсенче 490 плуг, 315 сўре, 22 сеялка юсарěç, урапасене, кўлмелли таврашсене тўрлетрěç. «Красный Восток» колхозри комсомолецсем уйăхлăх хушшинче 18 плуг, 1 сеялка, 15 сўре юсарěç, лаша кўлмелли хатěрсене 38 комплект тўрлетрěç, 45 центнер кěл, 18 центнер кайăк-кěшěк тислěкě пухрěç, уя 501 лав тислěк кăларчěç. Çак ěçе хăйсемпе пěрле пионерсемпе шкул ачисене те явăçтарчěç. «Красное Сормово» колхозри комсомолецсем, туллимар вăтам шкулти пионерсемпе шкул ачисем çуракине тухма хěрўллěн хатěрленеççě. Çамрăк комсомолец Карташов юлташ колхоз бригадирě пулса ěçлет. Унăн бригади авăна чи малтан çапса пěтернě, государство умěнчи парăмсене татнă, çуракине тухма хатěрленсе çитнě.

Сталинград облаçěнчи Иловлински МТС-ри комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвне анлăн сарса, районри комсомолецсемпе комсомолкăсем кěске вăхăтрах виçě тонна ытла тимěр-тăмăр, машинăсен тěрлěрен пайěсене 8000 штукăна яхăн пурě 8.968 тенкěлěх пухрěç. Вăл шутра коленчатăй валсем — 28, гильзăсем — 32, поршень ункисем — 517, радиаторсем — 5 тата ытти те.

ВЛКСМ Чăваш Обкомě йышăннă тăрăх мартăн 15-мěшěнче пулса иртнě воскресникре комсомолецсемпе çамрăксем тата пионерсем пěр пине яхăн машина пайěсем, икě тонна тимěр-тăмăр пухрěç. Воскресник уйрăмах Упи ялсоветěнчи «Янмурзино» колхозра пысăк ăнăçлăн иртнě. Воскресникре пурě 94 çын ěçленě, вěсем, машинăсен 142 тěрлě пайěсене пухнисěр пуçне, 292 килограмм кěл, пěр центнер кайăк-кěшěк тислěкě пухнă, уя 121 лав тислěк кăларнă. «Красный восток» колхозра комсомолец Тимофеев тракторăн малти урапине тупнă, ăна çийěнчех МТС-а леçсе панă.

Анчах та калас пулать, хăшпěр колхозсенчи комсомолецсем тытăннă ěçе вěçне çитерейměççě. Пухнă пайěсене МТС-а леçсе парса, вěсене хăвăртрах юсаса ěçе ярассишěн тăрăшмаççě. Машинăсен пайěсене пухса, вěсемпе çуракинче кирлě ялхуçалăх машинисене, тракторсене юсанă çěрте усă курмалла туни вăл пысăк ěç. Халě, вăрçă вăхăтěнче, государствăран сахалтарах ыйтмалла, ăна ытларах памалла. Çакна хăшпěр колхозсенчи пуçламăш организацисенчи комсомолецсем ăнлансах илеймен-ха.

Комсомолăн «Партизан», «Новая сила», «Новый мир», «Четай», «Шимар» колхозсенчи пуçламăш организацийěсем ку тарана çитсе те машинăсен пайěсене пуçтарас ěçе хутшăнман. Вěсем усăсăр выртакан машина пайěсем, тимěр-тăмăрсем пирěн колхозра çук тесе лараççě. Усăсăр выртакан машина пайěсене пухас сыйту кун йěркинче халě те тăрать. Анчах вăхăт пире кěтмест, çураки çывхарса килет, пуçланă ěçе вěçне çитермелле.

Вăйлă тырпул туса илес тесен, таса тата паха вăрлăх акса хăвармалла. Ваттисем çапла калана: «Мěн акатăн, çавна выратăн», — тенě. ВЛКСМ Чăваш Обкомě йышăннă тăрăх мартăн 5—20-мěш хушшинче колхозсенче вăрлăхсене тасатса сортлас тěлěшпе икěрнелěх туса ирттертěмěр. Комсомолецсемпе çамрăксем вăрлăх сортлас ěçе хăйсем çине илчěç. Икěрнелěх умěн районра 7 триер çеç ěçленě пулсан, икěрнелěх вăхăтěнче 16 триер пěр чарăнусăр ěçленě. Икěрнелěхěн юлашки кунě тěлне 5.748 центнер тěштырă, 1219 центнер пăрçа-ясмăк тасатса сортланă, 145 центнер çурхи тулла алăпа суйланă. «12 лет Октября», Калинин ячěпе тăракан тата «Красный восток» колхозсенче икěрнелěх пуçланиччен вăрлăх сортлас ěçе пачах та тытăнман пулнă, икěрнелěх вăхăтěнче тин вěсем вăрлăх сортлас тěлěшпе пысăк çитěнўсем турěç. Карай ялсоветěнчи «Красный восток» колхозра комсомолецсемпе çамрăк колхозниксем триерпа вăрлăх сортлас тěлěшпе çěрěн-кунěн ěçлерěç. Калинин ячěпе тăракан колхозра 276 центнер тěштырă, 42,55 центнер пăрçа-ясмăк, «Пятилетка» колхозра 309 центнер тыррă сортланă.

Анчах çитес çуракинче акса хăварма кирлě вăрлăха эпир халě те сортласа çитереймен-ха. Çавăнпа та колхозсенчи комсомолецсемпе комсомолкăсен акма уйăрнă вăрлăхсене халех сортласа çитерессишěн ывăнма пěлмесěр ěçлемелле. Вăрлăхсене алăпа суйлас ěçе шкулта вěренекенсемпе пионерсене массăллăн явăçтармалла.

Çуракине хатěрленнě май, колхозсенче туртăм вăйне хатěрлесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Комсомолăн районри хăшпěр пуçламăш организацийěсем вăкăрсене тата хěсěр ěнесене ěçе вěрентес тěлěшпе лайăх тěслěхсем кăтартрěç. Комсомолăн Ильич ячěпе тăракан колхозри организацийěн секретарě Тимофеев юлташ, Хěрлě Çара кайиччен ферма заведующийě пулса ěçленěскер, пěр вăкăра кўлсе çўреме вěрентнě, «Янмурзино», «Красное Сормово» колхозсенчи комсомолецсем вăкăрсене ěçе хăнăхтарассине пысăк тимлěхпе туса пыраççě. Колхозсенчи комсомолецсен вěсен примерě тăрăх вăкăрсене, хěсěр ěнесене ěçе вěрентессине хăйсем çине илмелле. Çуракине лашасем тутă, мăнтăр, вăйлă тухчăр тесе, вěсене лайăх пăхмалла.

«Çураки пуçланиччен юлнă вăхăтпа май килнě таран анлăн усă курса, ěçе тухма хатěрленсе çитес пулать, акана питě те кěске вăхăтра ирттерме мěн кирлисене пурне те халех туса çитермелле», — Калинин юлташ каланă çак сăмахсене пирěн комсомолецсен яланах асра тытмалла. Ака вăхăтěнче минераллă удобренисем, горючисем нумай кирлě пулаççě. Вěсене халě çуна çулěпе турттарма тăрăшмалла, ку тěлěшпе ěçлеме уйрăм комсомолецсене уйăрмалла.

Кăçал ака вăхăтěнче те, тырпула пухнă вăхăтра та хěрарăмсене ытларах ěçлеме тивет. Комсомолăн колхозсенчи организацийěсем ачасен яслисене, площадкисене уçма хатěрленмелле, çак ěçе организацилеме колхоз правленийěсене пулăшмалла. Яслисемпе площадкăсенче ěçлекенсене хатěрлекен курса ачасене юрататакан, вěсемпе ěçлеме пěлекен хěрачасене, комсомолкăсене вěренме ярас пулать. Халě çав курсра пирěн районра 18 çын çеç вěренет, пирěн 54 çын вěрентсе хатěрлес пулать. Кашни ялтах учительницăсем, вожатăйсем, комсомолкăсем пур. Вěсене ку ěçе анлăн явăçтармалла. Пěчěк ачасемшěн тăрăшасси — комсомолăн хисеплě ěçě пулса тăнине пирěн яланах асра тытмалла.

Çуракине хатěрленсе лайăх ирттерес ěçре комсомолецсен вырăнě пысăк та ответлă. Çак задачăна лайăх татса парас тесен, комсомолецсен колхозра ěç дисциплинине çирěплетессишěн мěнпур çамрăк хастарлăхпа ěçлемелле, ěçрен пăрăнса çўрекенсене, кахалсемпе сулăнчăксене хирěç кěрешмелле. Отечественнăй аслă вăрçă фрончěсенче хаяр çапăçусем пынă вăхăтра, хамăрăн çěршывшăн, хамăрăн совет государствишěн çапăçу хирěнче кунсерен çěршер çын пуçěсене хунă вăхăтра пирěн хушăра ěçсěр ларакансем валли вырăн пулмалла мар.

Халě ялхуçалăхěнчи специалистсем, комбайнерсем, трактористсем, колхозри машиноведсем чылайěшěсем фронтра ирсěр тăшмана хирěç çапăçаççě. Вěсен вырăнне пирěн çамрăксен, уйрăмах комсомолăн тăмалла. Кашни çамрăк çынăн тракторпа, е комбайнпа, е тата ялхуçалăхěнчи ытти машинăсемпе ěçлеме вěренмелле. Анчах ялхуçалăх кадрěсем, уйрăмах механизаторла кадрсем хатěрлессине эпир кирлě пек туса пыраймастпăр-ха. Хăшпěр комсомолецсем курссенче вěренессинчен пăрăнса юлма пăхаççě. Çакă вара ытла та киревсěр ěç. Калас пулать, тракторпа тата комбайнпа ěçлеме вěренме районри комсомолка-учительницăсем пуçарнипе уçăлнă курса та райцентрти служащисем, учительницăсем пурте çўремеççě-ха. Ялхуçалăх кадрěсем хатěрлес ěçре çак кунсенчех пысăк улшăнусем тумалла, кашни комсомолецăн, комсомолкăн ялхуçалăх ěçне вěренмелле.

Комсомолăн колхозри пуçламăш организацийěсен çуракине хатěрленнě май халăх хушшинчи политикăллă-массăллă ěçе татах та çўлěрех пусăма çěклемелле. Комсомолец-агитаторсем, чтецсем, беседчиксем халăх хушшинче ěçлессине вăйлатма тивěç. Вěсем кашни çамрăка, кашни колхозницăна фронт валли, çěнтерў валли пěтěм вăя хурса ěçлеме кирли çинчен ăнлантарччăр, бригадăсенче стена хаçачěсем кăларассине организацилеччěр.

Хамăрăн пěтěм вăя çуракине тухма хатěрленсе çитес ěçе парар, ăна тыйсăк пахалăхпа ирттерсе вăйлă тухăçлă тырпулăн никěсне хывар. Çěршывпа фронта тутти-сыпписр тěштырă, пахча-çимěç парса, нимěç захватчикěсене пуçěпех пěтерсе тăкма Хěрлě Çара пулăшар.

В. АРХИПОВ.

ВЛКСМ Красноармейски райкомěн секретарě.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Коллектив çĕнĕ çĕнтерÿсемшĕн кĕрешет

ÇЕМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). «Красный Октябрь» промартель коллективĕ хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтĕ ыйтнă пек çĕнетсе урăхлатнă. Вăл хăйне панă заданисене, уйрăмах васкавлă заказсене, вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçласа пырать.

Артель кăçалхи пĕрремĕш квартал планне темиçе кун малтан тултарчĕ. Хальхи вăхăтра артельри цехсемпе рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ сарăлса кайрĕ. Вĕсем кашниех май уявне ĕçре татах та ытларах çитĕнÿ тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Малта пыракан тимĕрçĕ цехĕн коллективĕ (вăл февраль уйăхĕнче плана 505 процент тултарнă) уява уйăхри задание 300 процентран кая мар тултарнипе кĕтсе илме пулчĕ.

Ку цехра хальхи нормăна виç-тăватă хут ирттерсе тултаракансем сахал мар. Сăмахран, тимĕрçĕсем Сазонов, Линьков, Белянский юлташсем март уйăхĕнче кашниех, вăтамран илсен, хăйсен ĕç нормисене 300—400-шер процент тултарса пынă. Вĕсемпе пĕрле ĕçлекен молотобоецсем те ĕç тĕслĕхĕсем начар мар, вĕсем хушшинче нормăна виçĕ хутран кая тултарса пыракансем çук. Акă молотобоецсем Вареновпа Яковлев тата Голубев юлташсем юлашки вăхăтра кулленех нормăна 350—400-шер процент тултараççĕ.

Май уявне çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн сборщиксем хушшинче те ăмăрту сарăлса кайрĕ. Вĕсенчен уйрăмах Егоров, Мигушов, Орешников юлташсем палăрса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем кашниех нормăсене 4 хут, уйрăм кунсенче 5 хут ирттерсе тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

100 сехетлĕх ĕçе—икĕ кун хушшинче

КУСЛАВККА. Комбинатри рабочисемпе служащисем хушшинче Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртура вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем—двухсотниксемпе трехсотниксем малта пыраççĕ. Мазуренко юлташ начальник пулса тăракан цехри Кочетков рабочи кашни сменăрах 4-шар норма тултарать. Клейменов, Алексеев, Куприянов, Ефремов рабочисем те ĕç нормине 200—250-шар процент тултараççĕ. Слесарь Язаров юлташ 100 сехетре тумалли ĕçе икĕ кун хушшинче турнă. Çавăн чухне вăл кунсерен 5-шер норма тултарса ĕçленĕ.

П. С.

Плана тăтăшах тултарса ĕçлет

КАНАШ. «Индпошив» мастерскойĕ хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать. Вăл январь уйăхĕнчи плана 114 процент тултарнă пулсан, февральри плана 122 процент тултарчĕ. Март уйăхĕнчи тĕслĕхсем татах та лайăхрах: коллектив хăйне панă задание срокченех 135 процент тултарчĕ.

Мастерскойри çĕвĕçсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса кайнă. Ăмăртура халĕ Рутте, Елохина тата Никитина стахановкăсем малта пыраççĕ. Вĕсем кулленхи заданисене пĕрмаях 150—200 процент тултараççĕ. Çак стахановкăсем хăйсем тухăçлă ĕçленĕ вăхăтрах çамрăксене те çĕвĕ ĕçне вĕрентеççĕ. Акă, сăмахран, Никитина юлташ Симонова хĕрачана çĕвĕ ĕçне вĕрентсе çитерчĕ те, халĕ Симонова хăй тĕллĕнех ĕçлет, сменăри задание ирттерсе тултарать.

П. СЕРГЕЕВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Кок-сагыз акма хатĕрленеççĕ

ÇĔРПУ. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем кăçал çĕнĕ культура — кок-сагыз акаççĕ. Кок-сагыз акма участоксем уйăрнă. Çав участоксене çемçетме 1.940 центнер кĕл, 723 центнер чăх-чĕп тислĕкĕ пухнă. Унсăр пуçне участоксем çине хĕлле 37 пин лав тислĕк турттарнă.

Кок-сагыз акса ÿстерме колхозсенче ятарласа звеносем организациленĕ. Звеносене ертсе пыма райçĕрĕç пайĕ курссемпе семинарсенчен 17 çын вĕрентсе кăларнă.

Акмалли машинăсене, вĕрлăха пур колхозсем те çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ.

Райсири чылай колхозсене кок-сагыз акса ÿстерме Чăвашсен селекционнăй станцийĕ пулăшса пырать.

Кăçалхи çул татах та тухăçлăрах пулĕ

КАНАШ. Иртнĕ çул Ямаккассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăйлă тырпул туса илсе, кашни ĕçкунĕ пуçне 5-шер килограмм çурă тĕштырă, 80-шар грамм пыл тата 20-шер пус укçан илчĕç. Колхоз производствинче тăрăшса ĕçлекен колхозниксем уйрăмах пысăк тупăш илеççĕ. Кăçал та колхоз бригадисем вăйлă тырпул туса илме хатĕрленеççĕ. Çуракине хатĕрленсе, колхозниксем уя тислĕк, торф нумай кăларчĕç. Ялхуçалăх машинисене тата урапа таврашĕсемпе кÿлмелли хатĕрсене юсама тытăнчĕç. Сеялкăсемпе сÿресене акана тухма хатĕрлесе çитерчĕç. Пионерсемпе шкулта вĕренекен ытти ачасем, колхоза çуракине хатĕрленме пулăшса, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухаççĕ.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе явса, Доронин ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттерме социализмлă ăмăртăва тухнă.

И. МАКСИМОВ.

Кадрсем хатĕрлеççĕ

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Ĕç ăнăçлăхĕ кадрсенчен килет. Вăрмар райçĕрĕç пайĕ çакна тĕрĕс ăнланнă. Çуракине хатĕрленнĕ май, кĕске срокла курссенчен 17 пчеловод, 27 овощевод тата 33 хĕрачана счетовод ĕçне вĕрентсе кăларнă. Халĕ тăватă вырăнта колхоз бригадирĕсем хатĕрлекен курссем ĕçлеççĕ, вĕсенче пурĕ 80 çын ытла вĕренет.

П. НИКОЛАЕВ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕн хăшпĕр итогĕсем

Çĕршыва фронтвалли тимĕр-тăмăр пухасси—государствăн пысăк ĕçĕ. Тимĕр-тăмăр пирĕн заводсене самолетсем, танксем, тупăсем тата ытти хĕçпăшалсем тума кирлĕ. Çавăнпа та кашни края, облаçа тата республикăна тимĕр-тăмăр пухмалли çирĕп плап панă. Çав плана фронтăн чи кирлĕ заказне пурнăçланă пекех вăхăтра тата шĕтĕмĕшпех пурнăçлас пулать.

Ку тĕлĕшпе пирĕн республикăри комсомол организацийĕ лайăх пуçару турĕ. ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ Мари Обкомĕпе ăмăртăва тухса тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе панă плана 150 процент тултарма пулчĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн предприятисенче, колхозсенче тата шкулсенче тимĕр-тăмăр пухас ĕç сарăлсах пырать.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче, канмалли кун, комсомолецсемпе çамрăксен тимĕр-тăмăр пухмалли тата ăна тиесе ăсатмалли воскресникĕ пулса иртрĕ. Аялта эпир çак воскресникĕн тулли мар итогĕсене пичетлетпĕр.

* * *

УЛАТĂР. Воскресника комсомолецсемпе тата çамрăксемпе пĕрле рабочисем, колхозниксем, служащисем те хутшăннă. Районĕпе пурĕ 74 тонна хурçа тата тĕслĕ тимĕр-тăмăр пухнă. Вăл шутран 53 тоннине вагонсем çине тиесе ăсатнă.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Юлашки вăхăтра районри предприятисемпе колхозсенче тимĕр-тăмăр пухас ĕç вăйланчĕ. Райпотребсоюз урлă 72 тонна, Союзутильĕн районри отделенийĕ урлă 60 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă. Районри çамрăксемпе комсомолецсем çак иртнĕ воскресникре татах 26 тонна пухнă.

* * *

КУСЛАВККА. Воскресника район центрĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем хастарлăн хутшăннă. Вĕсем пĕр кун хушшинче 6 тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Вăл шутран машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекенсем 2 тонна пухнă.

* * *

ИШЛЕЙ. Тимĕр-тăмăр пухас ĕçре уйрăмăнах Тивĕш, Ишек колхозĕсенчи çамрăксем, Ярабайкасси шкулĕнче вĕренекенсем пример кăтартаççĕ. Вĕсем çак иртнĕ воскресникре хуçалăхра кирлĕ мар тимĕр-тăмăра 14 тонна ытла пухнă.

* * *

ÇĔРПУ. (Хамăр корр). Пирĕн республикăри комсомол организацийĕ тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе государство панă задание 150 процент тултарма обязательство илчĕ. Çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе, районри çамрăксем ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. «Коснария» колхозри çамрăксем 250 килограмм хура тимĕр-тăмăр, хулари пожар дружининчи çамрăксем 130 килограмм тĕслĕ металл пухса пачĕç.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Комсомолецсемпе пионерсем тимĕр пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Хырай Енелĕнчи тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем 335 килограмм, «Янга Турмыш» колхозри ачасем 1 тонна та 200 килограмм, «Культура», «Красный Октябрь» тата Красин ячĕпе тăракан колхозсенчи пионерсем 6-шар центнер тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Н. КИРИЛЛОВ.

* * *

ПĂРАЧКАВ. Районри шкул ачисем тăрăшса тимĕр-тăмăр пухаççĕ. Пăрачкаври вăтам шкулта вĕренекенсем 2 тонна, Напольновăри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем 1 тонна, Семеновăри шкулта вĕренекенсем 0,5 тонна тимĕр-тăмăр пухса пачĕç. Ытти шкулсенче вĕренекенсем те çак ĕçе хастарлăн хутшăнаççĕ.

Анкарари судăн Совет Союзне хирĕçле провокациллĕ ĕçĕ

Германин посолне фон Папена вĕлерме тапăнни çинчен пуçарнă ĕçе апрелĕн 1-мĕшĕнче Анкарари уголовнăй судра пăхма пуçланă.

Анкарара, Ататюрк бульварĕнче февралĕн 24-мĕшĕнче бульварпа пыракан Папен çывăхĕнче бомба çурăлса кайнă та, çав бомбăна илсе пыракан çынни вилнĕ. Гитлеровецсем çакна хăйсен посолне вĕлерме тапăннă тесе кутăна пенĕ. Вĕсем юри провокаци тăвас шутпа çак ĕçе Англипе Совет Союзĕн темĕнле халиччен пулман юмахри агенчĕсем çине йăвантарасшăн пулнă.

Анкарара пурăнакан ютçĕршыв çыннисем ку ĕçе гитлеровецсем хăйсемех тунине, Турцин тулашри политикине пăтраштарас тесе, Турцин Совет Союзĕпе Англи тата вĕсен союзникĕсем хушшинчи çыхăнăвне пăсас шутпа тунине лайăх пĕлсе тăнă.

Илнĕ сведенисем тăрăх, нимĕçсен фашистла ушкăнĕсем çак ĕç пулса иртнĕ хыççăнах пĕтĕм вăйран тăрăшса следствие йăнăш çулпа яма хăтланнă. Çапла туса вĕсем хăйсен провокациллĕ ĕçĕнчен мĕн чухлĕ те пулсан усă курса юласшăн пулнă. Германин тăрăшнисем сая кайман, Турци влаçĕсем çак ĕç пирки айăпласа, икĕ çынна, Турци граждăнĕсене, тата Югославире çуралнăскерсене, Абдурахман студентпа парикмахерăн подмастерьине (Сулеймана, вĕсем коммунистсем пулса тăраççĕ, тесе пĕлтернĕ. Ку çеç те мар-ха, вĕсем тата икĕ совет гражданинне, ку ĕçе нихăш енчен те хутшăнманскерсене, пĕрне — Совет Союзĕн Стамбулри консульствин сотрудникне Павлова, тепĕрне Торгпредствăн сотрудникне — Корнилова, айăплама шухăш тытнă.

Судăн пĕрремĕш кунĕнчех çакă палăрнă: çак провокациллĕ ĕçсене тăвакансем, чăн айăплисем, следствирен те, судран та пăрăннă-мĕн, Турцин çак ĕçпе айăпланакан граждăнĕсем такам та пулма пултарнă, анчах та вĕсем нихăçан та коммунистсем пулман; совет граждăнĕсене, ним сăлтавсăрах, пĕр айăпсăрах айăпланăскерсене, çак процеса ахалех, Турцин следстви оргăнĕсем гитлеровецсен Совет Союзне хирĕçле кăмăлĕсене тивĕçтересшĕн пулнипе кăна илсе пынă.

Судра вуласа панă айăпламалли актра çапла каланă: бомба çурăлса кайнипе вилнĕ çын Югославире çуралнă турок пулнă, тенĕ. Унăн хушамачĕ Омер. Айăпланакансем ăна хăйĕн çав Папен çине тапăнас ĕçне тума пур енчен те хатĕрлесе çитернĕ пулнă, тенĕ. Взрыв пулмалли вырăна малтанах тĕплĕн палăртса хуман пирки, бомбăн хăватне тата унăн ванчăкĕсем ăçта çитме пултарнине пĕлеймен пирки темĕнле майпа çав ĕç пурнăçа кĕреймен, тесе кăтартса панă айăпламалли актра. Айăпламалли актра пушă сăмахсем кăна, унта Совет Союзĕн айăпланакан граждăнĕсем Омерпа е ытти айăпланакан икĕ турокпа çыхăну тытни çинчен калакан пĕр факт та çук. Çыхăну тытни çинчем мар, пĕр-пĕрне паллани çинчен калакан факт та çук. Павловпа Корнилов çак ĕçре хутшăнса ĕçленĕ тесе каланă сăмахсене çирĕплетме тăрăшман та.

Актра çак ĕçпех айăпланакан серб Стефан Падочник 1942 çулти январь уйăхĕнче Сирие тухса кайнă, ăна çухалнă тесе шутламалла, тенĕ.

Судăн пĕрремĕш ларăвĕнчех Павлов çакăн пек заявлени тунă:

— Ирсĕр элекçĕсем, айăпланакансен тенкелĕ çинче лараканссем, ман тăван çĕршывăн тăшманĕсене сутăннă. Вĕсене Совет Союзĕн тăшманĕсем Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнăва пăсас тесе сутăн илнĕ. Паян çав граждăнсем, Югославири коммунистсен ячĕпе витĕнсе, Совет Союзне хирĕç провокациллĕ ĕç тăваççĕ, ыран вĕсем Турцин республикăллă халăх партийи членĕсен ячĕпе витĕнсе Турцие хирĕç провокациллĕ ĕçсем тăвĕç. Эпĕ судран хама çак йĕрĕнчĕк господинсенчен уйрăм ларма ирĕк пама ыйтатăп.

Суд Павлов ыйтнă пек тунă, Павловпа Корнилов ытти айăпланакансенчен уйрăм ларнă.

Судăн пĕрремĕш ларăвĕнче Абдурахмана допрос тунă. Прокурор тĕрлĕ ыйтусем парса Абдурахманран коммунист туса хурасшăн пулнă. Анчах Абдурахман çапла каланă: эпĕ коммунистсене пăртак кăмăлланă кăна, Югославири коммунистсен партийĕнче тăман, социалист пулман, коммунизм мĕн иккенни çинчен пĕлесшĕн те пулман, тенĕ. Прокурор айăпланакан Сулеймана та коммунист туса кăтартасшăн пулнă, анчах унăн ку тĕлĕшпе те ĕçĕ ăнайман. Абдурахман Сулейман çинчен çапла каланă: тĕттĕм, пачах хутла пĕлмен Сулейман мĕскерле шухăш лайăххипе начаррине пĕлме пултараймасть-ха, тенĕ.

Çапла вара, гитлерла пропагандăшăн çавтери кирлĕ ыйту тĕлĕшпе, бомба пăрахнă çĕрте коммунистсем хутшăнса ĕçленĕ пек туса кăтартас тĕлĕшпе прокурорăн ĕçĕсем процесс пуçламĕшĕнчех ăнăçлă пулайман. Прокурор айăпланакан туроксем Павловпа тата Корниловпа çыхăну тытнă тесе те çирĕплетсе парайман. Абдурахман Павловпа паллашнă тесе палăртнă, анчах та унăн хушаматне следстви пынă вăхăтра кăна пĕлтĕм тенĕ. Айăпланакан малалла каланă тăрăх, вăл, имĕш, Корниловран, ăна темĕнле информацисем панăшăн турoксен 30 лирне —120 тенкĕ илнĕ пулать. Абдурахманăн ытти кăтартăвĕсем — процесăн чи элементарнăй нормисене пăсни пулса тăрать, Абдурахман хăйĕн кăтартăвĕсене вилнĕ Омерпа судра çук Падочник сăмахĕсемпе кăна çирĕплетсе панă. Çав кăтартусенче те Абдурахман темĕнле çын çине бомбăсем пăрахма хатĕрленни çинчен пĕр-ик çынтан илтнĕччĕ тесе кăна каланă.

Прокурор процесăн тĕллевĕ провокациллĕ пулнине хăех тăрă шыв çине кăларать. Вăл Абдурахманран: «Сире Павлов тен Риббентроп килĕ тесе каламарĕ-и?» — тесе ыйтать. Абдурахман хăйĕн рольне лайăхрах вĕренсе çитеймен пулас, вăл çапла ответлет: «Вăл çапла каланине эпĕ астумастăп», — тет.

Суд, прокурор ыйтнăран, Абдурахмана Омер çумĕнчен тупнă револьвер тăтăкне кăтартать. Çав револьвера Павлов Турцирен тухса тарнă Падочнике панă пулать те, судăн çав револьвера Омер Падочникрен илнине Абдурахманран ыйтса пĕлесси килет. Анчах та прокурорăн ĕçĕ ку тĕлĕшпе те ăнăçлă пулаймасть. Абдурахман — çав пăшала Омер Падочникрен илнĕ тесе çирĕплетсе параймастăп, тет.

Прокурор Папен çине мĕншĕн вĕлерме тапăнтăр тесе ыйтсан, айăпланакан пăхмасăр калама вĕреннĕ фразăпа çапла тавăрать: «Тапăнассин тĕллевĕ—Турцие Германие хирĕç пыракан вăрçа кĕртсе ярасси пулнă», тет. Анчах прокурорĕ те, айăпланаканни те хăйсен сăмахĕсен вĕçне-хĕрне пытарма тăрăшмаççĕ те, — мĕншĕн-ха апла пулсан Совет Союзĕн çак граждăнĕсем çав ĕçе хутшăннине палăртас тĕлĕшпе вĕсем çăвар та уçасшăн мар.

Суд председателĕ Сулейманран, вăл хутла пĕлмест тесе, нимĕн те ыйтасшăн мар. Ун вырăнне вăл лешĕ суд умĕнхи следствире каланă сăмахсене кăна вуласа парать. Унта Сулейман Югославири темĕнле коммунистсем çинчен, хăй совет посольствине чемодан илме пыни çинчен, çав чемодана унăн ячĕпе Югославирен яни çинчен, унта коммунистсемпе Югослави тĕрмисем пирки калакан материалсем пулни çинчен пĕр çын та ăнланмалла мар сăмахсемпе калакала парать. Юлашкинчен Сулейман—вилнĕ Омер ăна пĕр вырăс бомба пăрахма хушса яни çинчен каласа пачĕ, тесе пĕлтерет. Корнилов суд председательне Сулейманран вăл Корнилова хăçан тата ăçта тĕл пулни çинчен ыйтса пĕлме сĕнет. Сулейман — Корнилова чи малтанах совет посольствинче, Анкарара, 1941 çулти сентябрь уйăхĕнче тĕл пултăм, тет. Çакăн çине ответлесе, Корнилов суда çакăн пек заявлени тăвать: эпĕ Анкарана 1942 çулта январĕн 15-мĕшĕнче е 16-мĕшĕнче килтĕм, кăна Анкарари полици пропискинчен те курма пулать, тет. — Çак этем, — тет Корнилов, — тĕрлĕ юмахсем шутласа кăларать. Эпĕ ăна курасса та мартăн 7-мĕшĕнче допросра кăна куртăм.

Сулейман Корнилова фотографи тăрăх палларăм тенĕ хыççăн, Корнилов çапла калать: «Вăл мана хăшпĕрисем малтан паллама пулăшнă хыççăн çеç фотографи тăрăх палласа илчĕ пулас». Суд председателĕ Корниловран: «Кам тата мĕнле сăлтавпа сан фотографине малтанах ăна кăтартма пултарнă? Камшăн тата мĕншĕн кирлĕ пулнă вăл япала?» тесе ыйтать. Çак ыйтăва хирĕç Корнилов çапла ответлет: — Кун çинчен çав япалана тăвакансенчен хăйсенчен ыйтас пулать.

Павлов айăпланакан туроксене иккĕшне те пĕлместĕп тесе тăтăкăн калать, вăл çак судри ĕçсем детективнăй романсенче пулса иртекен историсем пекрех килсе тухаççĕ, тет. Павлов суд пулас умĕнхи материалсене тата суд следствийĕн материалĕсене хут çине çырса вырăсла куçарса пама ыйтать, çапла вара çав господинсене, тахçанах хатĕрлесе хунă маскăсем тăхăннăскерсене, тăрă шыв çине кăларма çăмăлтарах пулĕ, тет. Суд чăн-чăн айăплисене тупасшăн тăрăшмаллах ĕнтĕ, тет.

Ют чĕлхепе панă кăтартусене айăпланаканнисене куçарса памаллах — çавăн пек хушать процесăн элементарнăй норми те, анчах апла пулсан та, суд Павлов сăмахне итлемест, защитник ыйтнă тăрăх ахаль сăмахпа ăнлантарса панисем те çителĕклĕ тесе йышăнать.

Судăн малашнехи ĕçне апрелĕн 8-мĕшне хăварнă.

Анкарара пурăнакан ютçĕршыв ушкăнĕсем Папен çине тапăнни çинчен тĕпчес ĕçе çак çулпа, Совет Союзне хирĕçле çулпа янишĕн Турци прокуратуринчен тĕлĕнеççĕ. Ун пек туни нимĕçсен фашистла ушкăнĕсен, чăн-чăн айăплисене пытарса хăварма тăрăшакан, хăйсен провокациллĕ ĕçне Турцин, Совет Союзĕн тата ытти демократиллĕ çĕршывсен интересĕсене хирĕç усă курма тăрăшакан ушкăнсен арманĕ çине шыв юхтарни пулать, теççĕ. Çав вăхăтрах Анкарари ютçĕршывсен ушкăнĕсем çав судăн маневрĕсем, çавтери васкаса, еплерех килчĕ çапла тунăскерсем, арканаççех тесе шутлаççĕ, провокациллĕ инсценировкăра выляканĕсем ĕнтĕ судăн малтанхи кунĕнчех тăрă шыв çине тухрĕç, теççĕ. (ТАСС).

Гитлеровецсен выçлăхпа çарату режимĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Правительствăн «Фактсемпе цифрăсен» информаци бюровĕ Германире тата Европăри вăл оккупациленĕ ытти çĕршывсенче выçлăх ÿссе кайни çинчен пĕлтернĕ. Германирен тата вăл тытса илнĕ çĕршывсенчен паракан радиопередачăсем çакна кăтартса параççĕ: продовольствин мĕнпур запасĕсем гитлерла армисене тăрантарма çĕре каяççĕ, çавăнпа халăха продовольстви памалли норма тăтăшах чакса пырать, çĕнĕ тырра конфискацилеççĕ. Гитлеровецсем февралĕн 23-мĕшĕнче кăна-ха Германи халăхне продовольстви çителĕклĕ парса тăрасси çинчен каланăччĕ. Германин продовольствипе ялхуçалăх министрĕ тата статс-секретарь Беккер çапла пĕлтернĕччĕ: «Германин продовольстви запасĕсем кăçал 1941 çулти нормăсем тăрăх памалăхах çителĕклĕ», тенĕччĕ. Анчах март уйăхĕн пуçламĕшĕнче çав Беккерах çапла каласа хунă: «Вăрçăллă виççĕмĕш хĕл пĕтнĕ çĕре продовольстви памалли нормăсене икĕ тĕрлĕ сăлтавпа чакарма тивет: пĕрремĕшĕнчен, продовольствие çĕнĕ тырăччен тăсас тесе, иккĕмĕшĕнчек—вăрçа пула продовольстви нумай ытларах кирлĕ пулса тăнă пирки».

Италире продовольстви тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăни çинчен каласа, «Фактсемпе цифрăсен» бюровĕ çапла пĕлтерет: хресченсен хăйсем валли хăварма пултаракан тулă нормине питĕ нумай чакарнă, халăха продовольстви памалли нормăна татах чĕрĕк лайĕ чухлĕ чакарнă. Италире вăрттăн ĕçлекен «Радио—Италия» ятлă радиостанци Италире продовольстви çитменни продовольствие Германие ăсатнинчен килет тесе каласа парать.

Информаци бюровĕ малалла Петенăн нумаях пулмасть Франци хресченĕсене продовольствин мĕнпур запасĕсене фронт валли пама чĕнсе каланине илсе кăтартать. Голландире «ялхуçалăхне ертсе пыракан» Рейтер хресченсене çĕршыва продовольстви тĕлĕшпе катастрофа пуласран сăлса хăвармашкăн ялхуçалăх продукчĕсене ытларах туса кăларма чĕннĕ. Германири радио çапла пĕлтерет: Хорвати королевстви текенскерĕн экономика «министрĕ» ялтипе хулари халăхран туллăн, ырашăн, сĕлĕн тата çăнăхăн мĕнпур запасĕсене турттса илме хушса приказ кăларнă.

Стаффорд Криппс Инди лидерĕсемпе калаçни

ЛОНДОН, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Делири пресс-конференцире Стаффорд Криппс, Англи правительстви Индие панă сĕнÿсем çинчен каланă май, çакăн пек заявлени тунă: Инди оборонин ĕçне Англи правительстви ертсе пымалла, мĕншĕн тесен çав оборонăн ĕçне Индие хăйне парсан питех те пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă пулĕччĕç,—тенĕ. Индин чи паллă лидерĕсем Индин тата союзниксен канашлу оргăнĕсенче халех тата сисĕнмелле активлăхпах хутшăнса ĕçлесси çинчен тăракан ыйтăва Англия сĕннĕ плана йышăннă хыççăн тата çав план çителĕклĕ таран пулăшу илсен тин сÿтсе явма тивет. Генерал-губернатор ун чухне исполнительнăй советра Инди лидерĕсенчен тăракан оргăн тума тăрăшĕ.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Индин национальнăй конгресĕн исполком бюровĕ Англи сĕнĕвĕсем пирки йышăннă резолюци çав сĕнÿсен хăшпĕр пайĕсене критикăлать. Чи малтан — Инди оборонине англичансен ертсе пымалла тенĕ вырăна, çавăн пекех тата хăшпĕр провинцисем уйăрăлма пултарни çинчен каланине тата пухма палăртнă учредительнăй пухăва Инди княжествисен представителĕсене хутшăнтарасси пирки каланине критикăланă.

ЛОНДОН, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сикхсен мĕнпур партисен представителĕсенчен тăракан комитечĕ çакăн пек заявлени тунă: Англи сĕнĕвĕсене йышăнма май çук, мĕншĕн тесен çав сĕнÿсем провинцисем пĕр-пĕринчен уйăрăлассине ятарласах кăтартса тăраççĕ. Сикхсем,— тенĕ комитет йышăннă решенире, — мĕнпур вăйпа Пэнджаба Инди союзĕнчен уйăрассие хирĕç кĕрешме пулаççĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Хинду Махасабх партин («Индуссен аслă союзĕ») исполнительнăй комитечĕ çапла заявлени тунă: Англи сĕнĕвĕсенче «йышăнма тивĕçлĕ пунктсем те пур, анчах, питех те шел, Криппс çапла каланă: Англи правительствин декларацийĕн проектне пĕтĕмĕшпех йышăнмалла, е пĕтĕмĕшпех сирсе ямалла, çав хушăрах проектра темиçе паллă пункт пур, вĕсене пĕтĕмĕшпех е вĕсен хăшпĕр пайĕсене нимĕнле те йышăнма май çук, çавăнпа та Хинду Махасабх проекта пĕтĕмĕшпех сирсе ярать», тенĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Апрелĕн 1-мĕшпе 4-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Вăйлă çапăçусем ĕлĕкхи пекех Бирмăра пулса иртеççĕ. Юлашки вăхăтра Тоунгу хулишĕн вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тоунгу хули Рангунпа Мандалай хушшинчи чугунçул çинче вырнаçнă. Çак хулана тытса илес тесе, Япони командованийĕ ку вырăна питĕ нумай вăй пухнă. Япони çавăнти çарĕ темиçе пинрен те иртет. Хулана хÿтĕлес ĕçе Китайăн Бирмăри войскисем туса пынă. Çапăçусем уйрăмăнах мартăн 26-мĕшĕнчен пуçласа вăйланса кайнă, çав кун японецсем, хула оборонин зонине кăнтăр тата çурçĕр енчен шăтарса кĕрсе, хулана пĕтĕмпех çавăрса илнĕ. Оборонăн тулашĕнчи линийĕнче çапăçу татти-сыпписĕрех виçĕ кун хушши пынă.

Японецсем хулана пур енчен те атакăланă. Вĕсен атакине хăйсен авиацийĕ вăйлăн пулăшса пынă. Çапла пулсан та, Китай войскисем хăйсен позицийĕсене тăшмана паман, вăхăчĕ-вăхăчĕпе контратакăсем те тунă.

Тоунгури чаçсем патне çурçĕр енчен пулăшу янă пулнă, анчах та вĕсене японецсем вăйлă атакăла кĕтсе илнĕ те, вара вĕсем японецсен ункине таткса хулана кĕреймен. Хулари чаçсене японецсен ункине шал енчен татса тухма приказ панă. Çав приказа мартăн 31-мĕшĕнче пурнăçланă. Японецсен ункине татса, хулари чаçсем ытти чаçсемпе пĕрлешнĕ, вĕсем хулан çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтухăç енне вырнаçнă. Фронтăн çак участокĕнче çапăçусем чарăнман-ха.

Çапăçусем Пром хулинчен кăнтăр еннерехри районра та пыраççĕ. Мартăн 30-мĕшĕнче японецсен малти чаçĕсем хуларан 30 миля кăнтăр еннерех Англин войскисемпе тĕл пулнă. Вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Англи войскисем каялла чакса хулан çурçĕр енчи позицисене йышăннă.

Филиппинра çапăçусем пуринчен ытла Лусон утравĕ çинче пулса пыраççĕ. Батаан çурутравĕ çинче пĕр вăхăт лăпкă тăнă хыççăн японецсем каллех наступлени тума тапăнса пăхнă. Япони чаçĕсем хăйсен ушкăнĕсене урăхла йĕркеленĕ те сасартăк сылтăм флангра тата фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче Америкăпа Филиппин войскисен позицийĕсем çине тапăннă. Американецсем хăйсен артиллерийĕ пулăшнипе японецсене контратакăланă. Оборона зонине шăтарса кĕме ĕлкĕрнĕ японецсене каялла хăваласа янă.

Çĕнĕ Гвинея, Çĕнĕ Британия утравĕсен районĕнче тата Австралин çурçĕр енчи çыранĕсем çинче пуринчен ытла сывлăшри операцисем пулса пыраççĕ. Японецсем, Çĕнĕ Гвинейăн çурçĕр енчи çыранĕсенче хăйсен позицине çирĕплетнĕ хыççăн, кăнтăр еннелле куçса пĕтĕм утрава çавăрса илме хăтланаççĕ. Анчах та Морсбири авиаци бази вĕсемшĕн пысăк чăрмав пулса тăрать. Японин авиацийĕ пуринчен ытла çак пункта атакăлать, çав хушăрах Австралин çурçĕр пайĕнчи хуласем çине те сывлăшран вĕçсе пыра-пыра тапăнать. Союзниксен авиацийĕ японецсене чарас тесе, японецсен Çĕнĕ Гвинейăн çурçĕр енчи çыранĕ çинчи, Çĕнĕ Британипе Тимор утравĕ çинчи авиацин базисене атакăлать. Çав операцисенче çак эрнен малтанхи виçĕ кунĕ хушшинчех японецсен 30 самолетне пĕтерсе тăкнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив Чебоксарского Горптицекомбината выражает соболезнование семье покойного по поводу смерти мужа и отца, Главного бухгалтера Горптицекомбината

КОЗЛОВА
Кондратия Прохоровича

Похороны состоятся 7 апреля в 5 час. вечера.

Чебоксарской электростанции

ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры-водопроводчики, машинисты-дизелисты, смазчики, слесаря, слесаря-водопроводчики, электромонтеры, чернорабочие и уборщицы.

Адрес: ул. Чувашская, пос. Водосвета, контора. Отдел кадров, тел. 3—86, 4—28 3—1

Чебоксарской межрайконторе Главзаготскот Центра

требуются на постоянную работу:

главный бухгалтер, бухгалтер, приемщик скота, закупщик скота, старший проводник скота, рабочие по уходу за скотом, конюх, техничка-рассыльная.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Ярмарочная площадь, дом № 56

В соответствии с указанием Государственной Штатной Комиссии при Совнаркоме Союза ССР и Народного Комиссариата Финансов Союза от 20 марта 1942 г. за №191 все учреждения, предприятия и организации Чувашской АССР обязаны не позднее 1 мая 1942 г. ЗАРЕГИСТРИРОВАТЬ в соответствующих финансовых органах штаты, ставки и фонды заработной платы, а также сметы административно-хозяйственных расходов, утвержденных на 1942 год.

Регистрация проводится в порядке, установленном инструкцией НКФ-на СССР от 31 марта 1941 года за №246/36.

НАРКОМФИН ЧУВАШСКОЙ АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 722 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п.